Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 11 ВЫРСАРНИКУН 210(5023) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Сăтăрлă ĕçсен йулашкисене болъшевикла пĕтермеле

Çулталăк çурă кайала, 1937 çулта, ПСК(б)П Тĕпкомĕн февралъ-мартри пленумĕ пулса иртрĕ. Çав вăхăтранпа пĕтĕм парти, çавăн пекех пирĕн чăваш парторганизацие те, Сталин йулташ кăтартăвĕсемпе тата ПСК(б)П Тĕпкомĕн февралъ-мартри пленумĕн решенисемпе хĕçпăшалланса, контрреволюцилĕ троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла шпионсен йăвисене çĕмĕрсе тăкас йенĕпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕ, партипе правителствă аппарачĕсене двурушниксемпе предателсенчен тасатрĕ. Партин, советăн, хуçалăхăн йертсе пыракан органĕсенчен троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла фашисла бандăсене тимĕр шăпăрпа шăлса тасатнă. Йертсе пырас ĕçе çĕнĕ, пултарулă, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, тăван çĕршыв ĕçĕшĕн кĕрешме пултаракан партири тата партире мар пиншер болъшевиксем пычĕç.

Партипе советăн республикăри органĕсене, хуçалăх организацисене, социалисăм строителствин тĕрлĕ участкисене кĕрсе ларнă халăх тăшманĕсем—фашисăмăн троцкисла, бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсем хуçалăхпа културă строителствине сахал мар сăтăр туса хăварчĕç.

Хăйсене хăйсем совет влаçĕшĕн тăрăшакансем пек, коммуниссем пек кăтартса, халăх тăшманĕсем чăваш парторганизацинче ответлă вырăнсенче ларса, социалисăмлă промышленнăçра, йалхуçалăхĕнче, строителствăра, културă фонтĕнче сăтăр хыççăн сăтăр тунă.

Халăх тăшманĕсем механисăмсене йурăхсăра кăларнă, аварисем, крушенисем тунă, пушарсем кăларнă т. ыт. те. Республикăн питех те пысăк вырăнта тăракан строителствисене темиçешер çула чăсса пынă, индустриализаци ĕçне пĕтерсе лартма, йалхуçалăхне социалисăмла реконструкцилес ĕçе чарма, чăваш халăхĕн формă йенчен нацилĕ, содержани йенчен социалисăмлă културине пĕтерсе лартма тăрăшнă.

Промышлĕннăç йенĕпе троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла фашисла бандăсем Чăваш „республикĕнче промышлĕннăç аталанăвне, производствăлă программăна тултарассине арkатма тăрăшнă. Ку тĕлĕшпе вĕсем планировани ĕçне арпаштарнă, капиталънăй строителствă планне тултарассине çултан çула чăсса пынă. Канашри вакунсем йусакан савăта, Куславккари комбината, фосфорит савăтне тата ыттисене те сăтăрла туса лартнă.

Йалхуçалăх йенĕпе тăшмансем коллективизаци хăвăртлăхне чарма тăрăшнă, йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пăсса пыма тăрăшнă, пусуçаврăнăшне, вăрлăх ĕçне колхозсенчи планировани ĕçне пăтраштарнă, колхозсемпе колхозниксен тупăшне сахаллатма тăрăшнă, колхозсенчен массăлăн кăларас ĕçе организацилене, налог политикине пăсса колхозниксемпе йединоличниксене кӳрентерме хăтланнă, ăратлă выльăх ĕрчетес ĕçе вăйсăрлатнă, выльăхсене вĕлерсе пĕтерме хăтланнă.

Културă строителстви йенĕпе тăшмансем пурне те хута вĕрентес ĕçе пĕтерсе лартма, шкулсенчи вĕренӳпе воспитани ĕçне арkатма тăрăшнă. Çакăн пекех сывлăха сыхлав ĕçĕнче, суту-илӳре, финанс ĕçĕсенче тата ытти ĕçсенче те сахал мар сăтăр тунă.

Троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла диверсантсемпе шпионсен сăтăрлă ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнăран вара чылай вăхăт иртрĕ. Анчах тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси çаплах çителĕксĕр, питĕ хуллен пырать. Сахал мар руководителсем сыхлăх çинчен, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси çинчен вĕçĕмсĕр сăмах çапаççĕ, анчах хăйсем сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ, çак ĕçне оппортунисла пăхаççĕ.

Парти Обкомĕ халăх комиссариачĕсене, районсенчи парторганизацисене ку ыйту тăрăх сахал мар конкретлă кăтартусем панă, ку ыйту тăрăх йатарласа канашлусем туса иртернĕ. Çак ыйтупах пуçламĕш парторганизацисен тата районсенчи отчотпа суйлав пухăвĕсенче парторгансене çирĕп кăтартусем парса хăварнă. Апла пулсан та сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çаплах сисĕнмеле ĕçсем туни çук-ха. Çакна, чăн малтан, Чăваш республикĕ социалисăм строителствин чылай участкисем тăрăх кайа йулса пыни лайăх кăтартать.

1938 çулăн малтанхи çурмаçулĕнче республикăри промышлĕннăçлă наркоматсем тăрăх продукци кăларас плана 46 процент çеç тултарнă. Уйрăмах капиталънăй строителствă планне тултарасси начар пырать. Çавăн пек, сăмахран, 1938 çулăн малтанхи çурмаçулĕнче çулталăк планне Çăмăл промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 33,4 процент, Вăрман промышлĕннăç Халах Комиссариачĕ тăрăх—15,7 процент, Вырăнти промышлĕннăç Халăх Ккомиссариачĕ тăрăх—21,1 процент, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ тăрăх—27,1 процент, Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ тăрăх: коммуналънăй хуçалăх строителстви планне 22,4 процент, пурăнмали çуртйĕр строителстви планне 26,5 процент, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тăрăх—29,5 процент, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ тăрăх 25,5 процент çеç тултарнă. Йалхуçалăхĕнче те тăшмансем пусуçаврăнăш, суртлă вăрлăх, ăратлă выльăх ĕрчетес йенĕпе туса хăварнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессии начар пырать.

Кăçалхи кĕраки вăхăтенче те, вăрлăх ĕçне пăтраштарса йăнине пула, чылай районсем суртлă вăрлăхпа акас плана тултараймасăр йулчĕç.

Республикă нумай вăхăт хушши государствăна аш-какай тăратас йенĕпе кайа йулса пырать. Çентаберĕн 1-мешне çулталăк планне те 53 процент çеç тултарнă. Укçатенкĕ пухас, таварçаврăнăш планне тултарас ĕçсем те начар тăраççĕ.

Çаксем пурте вĕсем тăшмансем туса хăварнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессии çителĕксĕр пыни çинчен калаççĕ.

Чăваш парторганизаци хăйĕн облăçри 19-мĕш конференцине социалисăм строителствинче пысăк çитĕнӳсем тунипе пырать. Анчах сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвăрт, татăклăн пĕтернĕ пулсан, çитĕнӳсем тата пысăк пулнă пулĕччĕç.

Çентаберĕн 11—13-мĕшĕсенче парторганизацисен районсенчи тата хулари пухăвĕсем пулаççĕ. Пухусенче сӳтсе-йавмали тĕп ыйтусенчен пĕри—тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессии çинчен пулать. Республикăри пĕтĕм парти организацисен задачĕ вăл—пĕтĕм вăйа хурса сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвăртрах пĕтерессишĕн, тăшмансен йулашкисене пур участкăсенче те пĕтерессишĕн, государствă планне тултарассишĕн кĕрешесси пулать. Руководителсен, коммуниссен пултарулăхне, вĕсен политикăлă хастарлăхне, парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине çак задачăсене пурнăçа кĕртни тăрăх хаклаççĕ. Коммуниссен парткомсенчен вĕсем отчотпа суйлав пухăвĕсенче ку тĕлĕшпе парса хăварнă кăтартусене пурнăçа мĕнле кĕртни çинчен ыйтас пулать. Парти организацисен хăйсен руководителĕсене вĕсен ĕçĕсене кура тĕрĕслемеле, çитменлĕхсене хăйуллăн тупса палăртмала, туман ĕçе тунă тесе суйакансене тăрă шыв çине кăлармала.

Облăçри 19-мĕш партконференцие хатĕрленсе иртерес ĕç социалисăм строителствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас ĕçĕн пуçламĕшĕ пулмала. Çакă ĕнтĕ пĕтĕм Чăваш парторганизацин пайанхи чи пысăк задачĕ пулать.

Испанири вунпĕрĕмĕш дивизи комиссарĕн паттăр вилĕмĕ

БАРСЕЛОНĂ, çентаберĕн 8-мĕш. (ТАСС). Ебро фронтĕнче республикă çарĕн паттăр вунпĕрĕмĕш дивизи комиссарĕ—Гарсиа коммунис вилнĕ.

Дивизи штабĕнче çакăн пек пĕлтерӳ илнĕ: республиканĕçсен батальонĕсенчен пĕри тăшманăн пысăк вăйĕсем хĕсиипе кайала чакнă. Кайала чакассине чарса лартас тесе, Гарсиа çавăнта кайнă. „Наступлени вăхăтĕнче комиссар малта пулмала, кайала чакнă чухне—хыçалта" текен лозунга пурнăçа кĕртсе, малти ретре пулнă чухне ăна вĕлернĕ.

Батальонри боецсем кайала чакма чарăнса пăлхавçăсем хĕсипе пĕр кун кунĕпех чарса тăнă. Комиссарăн ӳчĕ çапăçакансен линийĕсем хушшинче йыртнă. Каçхине, батальонри салтаксен йышĕнчен чĕнсе илнĕ добровольĕсем комиссарăн ӳтне республиканĕçсен линийĕсем патне илсе пынă.

Испанири ĕçсене хутшăнас мар тĕлĕшпе ĕçлекен комитет председателĕ Плимут зайавленийĕ пирки Совет правителстви панă ответ

ЛОНДĂН, çентаберĕн 9-мĕш. (ТАСС). Çентеберĕн 2-мĕшĕнче Испанири ĕçсене хутшăнас мар тĕлĕшпе ĕçлекен комитет председателĕ лорд Плимут ССРС полпредне Майский йулташа меморандум панă, унта вăл Британи правителстви йачĕпе çакăн пек зайавлени тунă: волонторсем тесе калакан салтаксене Испанирен илсе тухса кайас план пирки Испани правителстви тата генерал Франко панă ответсем хыççăн шухăшласа пăхсан, епĕ Бургоса тата Барселонăна комитет çекретарне Хеммингa йама кирли çинчен вывăд тăвасси патне çитсе тăтăм. Комитет çекретарĕ Хемминг, Испани правителствипе тата Франкопа пĕрле, çав волонторсем тесе калакансене Испанирен илсе тухас плана хирĕç вĕсем икĕ йенчен тăратнă сĕнӳсене сӳтсе-йавмала, иккĕшĕн отвечĕсенче те пур ăнланмала мар вырăнсене тӳрлетмеле, республиканĕçсем хушшинче те, пăлхавçăсем хушшинче те тухса кайнă „хиреçӳсене" сирсе йамала, кунсăр пуçне Хемминг тавăрăнмасăр комитет пухăнмала мар,—тенĕ.

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Майский йулташ çав çулте асăннă меморандум пирки Плимут патне ответ йанă, вăл ответра совет правителстви йачĕпе çапла çырнă:

„Британи меморандумĕ комитет волонторсене илсе тухас тĕлĕшпе сĕннĕ план пирки панă икĕ ответне те (Испани правителствинне те тата Франко генералăнне те) пĕр вичене лартать пулсан та, совет правителстви çак икĕ ответ хушшинче пысăк уйрăмлăх пур тесе шутлать. Испани правителствин отвечĕ, планри хăшпĕр положенисем ăна килĕшменнине пăхмасăрах, комитет планне йышăннине уççăн кăтартса парать. Франко генералăн отвечĕ урăхла. Вăл хăйĕн „принципĕпе" „волонторсене" илсе тухассипе килĕшме пулать пулин те, унăн отвечĕ комитет планне йышăнманнине уççăн кăтартса парать.

Çакăн пек условисенче комитет 1938 çулти ийулĕн 5-мĕшĕнче сĕннĕ план (вăл план 1937 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче Британи правителстви сĕннĕ плана кăштах урăхлатса тунăскер çеç пулса тăрать) генерал Франко йышăннă позицисене май хальхи вăхăтра пачах та пурнăççăр пуласси çинчен иккĕленӳ çук. Çав плана тӳрлеткелесе хатланни пăлхавçăсене çĕнĕрен питех те пысăк уступкăсем тума кăна пулăшать. Совет правителстви çавăн пек уступкăсем тăвассине хирĕç.

Çакăнта асăннисене шута илсе, совет правителстви комитет çекретарне Хеммингa „хăйсем кайса килĕшӳ тăвас" йенпе Испани правителствипе тата Франко генералпа „волонторсене" илсе тухмали плана сӳтсе-йавма Испанине йама сĕннипе килĕшме пултараймасть. Совет правителстви çакăн пек кайса çӳресси вăл усăлă ĕç мар тесе çеç шутламасть, çакăн пек хăтланни вăл комитетпа Франко генерал хушшинчи хушăнусем чăн характерне те пăсма пултарать тесе шутлать.

Анчах, Британи правителстви, Франко генерал комитет планне йышăнманнине пăхмасăрах, пĕр йенчен комитетпа, тепĕр йенчен—Испани правителствипе тата Франко генералпа „уйрăмшарăн килĕшӳ тума" шутлать пулсан, совет правителстви комитетпа калаçусем тума иккĕшин представителĕсене те Лондăна чĕнессине хирĕç пулмĕччĕ".

(ТАСС).

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ

Çентаберĕн 9 мĕшĕнче Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕнче социаллă страховани совечĕсен ĕçĕсем çинчен тунă докладсем тăрăх пренисем пынă.

Савăтсенчи социаллă страховани совечĕсем питĕ пысăк вырăн йышăннине палăртса, пренире тухса калаçнă йулташсем социаллă страхованинче ку таринччĕнех татса паман задачăсем çинче чарăнса тăнă, ĕçри опытсене каласа панă. Тухса калаçнисем пурте пекех сывлăха сыхлав органĕсене вĕсен ĕçĕнче питĕ пысăк çитменлĕхсем пурришĕн хытă критикленĕ.

Сталин йачĕпе тăракан 8-мĕш №-лĕ шахтăри (Горловкă) шахтă комитечĕн председателĕ Морозăв йулташ шахтăра социаллă страховани ĕçĕнчи интереслă опыт çинчен каласа панă. Шахтăри страховани активĕ—производствăри чи лайăх стахановĕçсем. Сывлăха сыхлас йенĕпе пысăк ĕçсем тунипе чирлекенсен хисепĕ кăçалхи çул тăвата хут чакнă. Шахтком шахтăри кашни участкă çине газпа хутăшлă шыв кӳрсе тăратмала тунă. Шахтăра çĕнĕ, културăлă мунча туса лартнă. Ĕç вăхăтĕнче тăхăнмали тумтирсене час-часах çуса тăма пуçланă.

Пренисем пĕтнĕ хыççăн тата Скорабогатькопа Диссон йулташсен йулашки сăмахĕсем хыççăн, докладсем тăрăх резолюци хатĕрлеме пленум 23 çынран комисси суйланă. (ТАСС).

Рабочисем парти историйĕпе хытă интересленеççĕ

Ĕнер кăнтăрлахи перерыв вăхăтĕнче тата ĕçлесе пĕтернĕ хыççăн Мускаври „Красный пролетарий" савăтри цехсенче çентаберĕн 9-мĕшĕнче „Правда" хаçатра пичетленнĕ Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин историн кĕске курсĕн умсăмахне тата пĕрремĕш главине нумайăн пухăнса вуланă.

Хаçатра пичетленнĕ материалсемпе савăтри рабочисем питĕ хытă интересленеççĕ.

(ТАСС).

Партилĕ пропагандă опычĕ

Нумай пулмасть Украинăри коммунисла партин Тĕпкомĕ савăтри парторганизацинче пропагандă ĕçĕ мĕнле тăни çинчен Ковалъ йачĕпе тăракан савăтри (Донбасс) партком çакретарĕн Акименко йулташăн докладне итленĕ. Тĕпком—савăтри парторганизаци пропагандă ĕçĕ тĕлĕшĕпе хăшпĕр çитĕнӳсем тунине палăртнă. Коммуниссенчен пурте пекех парт-вĕренĕве çӳреççĕ, пропагандиссене пĕтĕмĕшпех тупса çитерне, слушăтелсем шкулсемпе кружоксене активлăн çӳреççĕ. Коммуниссем йаланах ССР Сойузĕнчи тата тĕнчери лару-тăрупа паллашса тăраççĕ.

Мĕнле тунă партком çавăн пек çитĕнӳсене?

Уйрăмăнах пропагандиссен кадрĕсене суйласа лартасси çине хытă çаврăнса пăхнă. Суйласа илнĕ 15 йулташ, тĕрĕссипе илсен, парторганизацинче чи лайăх çынсем пулса тăраççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ аслă шкулсенче вĕренсе тухнă йе пĕтĕмпех вĕренсе пĕтереймен.

Лайăх йĕркеленĕ парткабинет, пропагандиссен кашни вунă кунта пулакан çеминарĕ, парти пропагандиыйтăвĕсем тăрăх йатарласа тунă консулътацисем, парти строителстви, хуçалăх, политикă тĕлĕшри чи кирлĕ ыйтусем тăрăх тапхăртапхăр канашлусем туса иртерни—çаксем пурте пропагандиссен кадрĕсене ӳсме майсем панă.

Партком партилĕ шкулсĕн ĕçĕсене тимлĕн сăнаса пырать. Партком членĕсем пурте кружоксен занъатийĕсене çӳресе калаçусем идейăпа политикăлă шухăшĕпе интересленеççĕ. Парткомăн пур ларăвĕ те партилĕ вĕренĕвĕн кулленхи ыйтăвĕсене сӳтсе-йавнисĕр пулса иртмест. Кашни занъати хыççăн парти комитечĕ коммуниссем кружоксене тата шкулсене мĕнле çӳренине тĕрĕслет, занъатисене пыман коммуниссене чĕнсе илсе вĕсемпе калаçать, занъатисене мĕншĕн пыманнине тĕтчесе пĕлет.

Çак мĕн пур мерăсем партилĕ пропагандă ĕçне чылай лайăхлатнă, коммуниссен политикăлă тата производствăлă активлăхне чылай çĕкленĕ.

Партвĕренӳ слушăтелĕсем пулнă темиçе йулташа партин йертсе пымали ĕçĕсене лартнă. Вĕсенчен пĕри цехри парторг пулса ĕçлет, теприне завком председателне суйланă, виçĕ йулташ пропагандиссем пулса ĕçлеççĕ.

Савăтри агитколлектив 140 çынна çитиччен ӳснĕ. Савăтри партвĕренӳ кружокĕсенче тата шкулĕсенче вĕренсе пĕлӳ илнĕ коммуниссем (69 çын) çав агитколлективăн тĕп шăнăрĕ пулса тăраççĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕнчи нацианалънăçсем

ССР Сойузĕн Наукăсен Академийĕ çак кунсенче интереслă ĕç туса пĕтернĕ. Халăх-хуçалăх Учочĕн Тĕп управлени заданийĕ тăрăх, çитес Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ тĕлне Совет Сойузĕнчи мĕн пур националънăçсен тата чĕлхесен списăкне хатĕрленĕ. Ку ĕçе тума Совет Сойузĕнчи паллă лингвиссене, етнографсене, историксене, економиссене хутшăнтарнă пулнă. Пирĕн нумай нацилĕ тăван çĕршыв çинчен тĕплĕн пĕлме май паракан ĕç пулса тăнă.

Списăкра Совет Сойузĕнче пурăнакан мĕн пур 59 националънăç çинчен çырнисем пур. Нацилĕ ушкăнсемпе тата народнăçсемпе пĕрле вăл цифăр 155 çитет. Совет çĕршывĕнче 141 чĕлхепе калаçаççĕ. Совет Сойузĕнчи халăхсенчен нумайĕшĕн хăйсен çырулăхĕ пур. Темиçе вуншар мĕлйун çын шутланакан халăхсемпе пĕрлех, пирĕн çĕршывра темиçе çĕр çынлă народнăçсем те пур. Водь йатлă народнăç çавăн пек. Водйаксем Ленинград облăçĕн хĕвеланăç пайĕнче пурăнаççĕ. Вĕсем пурĕ те 700 çын çеç. Вĕсем хăйсен тăван чĕлхипе калаçаççĕ.

Таймырти нацилĕ округра 699 çын долгансем пурăнаççĕ. Иркуртск облăçĕнчи Сайан тăвĕсен çурçĕр йенче 432 карагас пурăнаççĕ. Вĕсен хăйсен тăван чĕлхи.

Грузин республикĕнчи Хура тинĕс хĕрринче лазсем, Таймырта нганасансем, Колымăра—одулсем пурăнаççĕ. Вĕсем пурте 400—600 çынлă, хăйсен тăван чĕлхисемпе калаçакан народнăçсем. Совет Сахалинĕ çинче чи пĕчĕк йышлă народнăç пурăнать. Вăл—ороксем. Вĕсем пурĕ те 154 çын кăна.

(ТАСС)

Промысла кооперацинчи работниксен канашлăвĕ

Çак кунсенче Мускавра промысла кооперацин вырăнти работникĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Канашлу ĕçĕсенче пулнă ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ Микойан йулташ кулленхи кирлĕ таварсен производствине вăйлатас тата ĕççыннисен йăла тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене лайăхлатас йенĕпе промысла кооперацинчи работниксем умне чылай пысăк задачăсем лартнă.

Канашлу 1938 çулта плантан иртерсе 156 мĕлйун тенкĕлĕх атăпушмак, трикотаж, галантерейă тата ытти таварсем кăларма решени йышăннă.

(ТАСС).

Армени столицинче В. И. Ленин памйатникĕ лартаççĕ

Йереван хула совечĕ йышăннă тăрăх, Йереван хули варринче, Ленин площчĕтĕнче, етемлĕхĕн аслă генин Владимир Илйич Ленинăн монументлă памйатникне лартаççĕ.

Памйатник пройектне тăвас тĕлĕшпе Пĕтĕм Сойузри конкурс уçнă. (ТАСС).

Оборонăна Тĕреклетмели Зайомăн 3-мĕш тиражĕ

Çентаберĕн 11—12 мĕшĕсенче Одессă хулинче ССР Сойузĕн Оборонине Тĕреклетмели Государствăн Шалти Зайомĕн виççĕмĕш тиражĕ пулса иртет. Тиражра 43.703.800 тенкĕлĕх 265 пин выигрыш пулать. (ТАСС).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сулахайран: ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Совет Сойуз Геройĕ П. И. Пумпур, Обком çекретарĕ И. В. Дубăв. Сылтăмра: митинга пынă демонстраци.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

ПРИМОРСКИ 1-мĕш ÇАР БОЙЕЦĔСЕН ПАТТĂР ĔÇĔСЕМ

Комиссар Йефимăвăн тата лейтенант Винокурăвăн паттăр ĕçĕ

Йефимăв комиссар пулса ĕçлекен танк чаçĕ августăн 6-мĕшĕнче задани илнĕ—Безымйаннайа высота çине тухмала та тăшманăн пулемечĕсене, батарейĕсене путарса лартмала. Лăпкăн, пĕр хумханмасăр тата шанчăклăн кĕрсе ларнă танкиссем башнĕ ăшне, вĕсем танксене урса кайнă самурайсем çине тытнă. Танксене пыма пит йăвăр пулнă. Танксене лачакана кĕртсе лартас мар тесе, вĕсен лачака тавра çавăрăнма тивнĕ. Уçă вырăнпа пынă. Самурайсем çакăнпа уçă курса, танксем çине калама çук хыттăн пеме пуçланă. Пĕтĕм колоннă куçĕ умĕнчех ротă командирĕн малта пыракан танкĕ çунса кайнă.

— Командованине хăвăр çине илĕр,—приказ панă комиссар унпа пĕрле пĕр машинă çинче ларса пыракан лейтенант Винокурăва.

— Есть, товарищ комиссар,—ответленĕ лейтенант, комиссар танкĕ малти рете ыткăнса тухнă.

6 танк тăшман окопĕсем патне татса тухнă, пăралук картана сирсе пăрахса, Безымйаннайа высота çине хăпарнă. Комиссар танкĕ сопка тăррипе пырса тăшман окопĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

Сасартăк, кĕтмен хушăран танк хыçĕнчен танксене çĕмĕрекен тупăран пеме пуçланă. Снарйад пырса ÿкнипе танк сăнчăрĕ татăлса кайнă тата механикпа лейтенант хыттăн аманнă. Иккĕмĕш снарйад пырса ÿксен, механик вилнĕ. Виççĕмĕшĕ—мотора çĕмĕрнĕ. Танк чарăннă.

— Ну, мĕн тăвас, [illegible] пулаť,—тесе калана комиссар гранатăна, хăйĕн пистолетне тата аманнă лейтенантăн пистолетне илсе. Самурайсем нумай кĕтсе тăма паман. Ушкăнĕ-ушкăнĕпе танк патнеле шуса пырса ăна „тĕрĕслесе“ пăхма пуçлавă. Чи малтан вĕсем тупăна хускатса пăхнă, люксене уçма тапратнă, анчах та вĕсене шалтан питĕрсе хунă пулнă. Çакăн хыççăн самурайсем охранă хăварса, танк ăшĕнчи çынсем тухасса кĕтме пуçланă. Ун ăшĕнчи паттăр çынсем танк ăшĕнче талăк ытла ларнă, аманнă лейтенант фљагăран йулашки тумлам шыва ĕçсе йарсан, танк ăшĕнчен тухма шутланă. Люка уçма тытăннă, анчах вăл уçалман.

— Çÿлти люкран шăвăнса тухма вăйу çитет-и?

— Çитет,—ответленĕ лейтенант Винокурăв.

Кĕтсе тăрсан, пирĕн артиллери пеме пуçларĕ, „хăйулă“ самурайсем окопсене тарса пытаннă, комиссар Иефимăв танк ăшĕнчен тухса, алла бомбă тата пистолет илсе, танк ăшĕнчен тухакан лейтенанта сыхласа тăнă. Самурайсем, çакна курса, пулеметран пеме пуçланă.

— Кÿлĕ патнеле шăвăн,—команда пана комиссар,—епĕ персе тăратăп.

Лейтенант хырăм çинче шуса пынă, анчах та пынă чухне çула çухатса йарса, йапонĕçсен территорине лекнĕ. Анчах вăл унта та çухалса кайман, ун çине икĕ йапонĕц тапаннă, вăл пистолетран персе вĕсене иккĕшне те вĕлернĕ.

Тепĕр темиçе сехетрен пирĕн чаçсем наступлени тума пуçланă, аллине пистолет тытса хырăмпа шуса пыракан лейтенанта вĕсем хăйсемпе пĕрле илнĕ.

Лейтенант ăнран кайнă, анчах та комиссарăн паттăрлăхĕпе хăйулăхĕ унăн ăсĕнче йулнă, тен, вăл ĕмĕрлĕхех йулĕ.

Лейтенант Винокурăв тăна кĕрсен, чи малтан вăл комиссар çинчен ыйтнă, унăн пурнăçĕшĕн çуннă.

— Комиссар [illegible]—ыйтнă вăл. Хăй [illegible] тăракан комиссара курсан çеç лăпланнă, комиссар аманман пулнă.

Комиссар Йефимăв тата лейтенант Винокурăв хăйсен чаçĕнчи бойецсемпе тĕл пулни пит савăнăçлăн иртнĕ, вăл нихăçан манмала мар пулса йулнă. Паттăр вилĕмпе вилнĕ механикшăн — танк çинчи виççĕмĕш членшăн — вĕсем фашисла самурайсене лайăххăн тавăрма йышăннă.

Аслă политрук Романăв.

„На защиту родины“ хаçат. № 8. 1938 ç. августăн 14-мĕш.

Мускав çар округĕн № чаç лагĕрĕсенче

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çар ĕçне тата политикăна вĕренессинчи отличник, бойец-пулеметчик В. Н. Блинов „противник“ тапаннине сирсе йарать.

Б. Фишманпа Д. Чернов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото)

ТАНКИС ЧЕЙЕЛĔХĔ

Танк пралук картасем витĕр тухса кайнă. Самурайсен пытанса ларнă малти речĕсенчен темиçе вунă метр çеç тăрса йулнă. Механик-водитĕл Киçельов йулташ танка шанчăклăн илсе пыраť. Танк командирĕ Кузнецов йулташ тупăран тĕл персе, тăшманăн батарейĕсене, пулемечĕсене пĕтерсе тăкаť. Танк вăрăмăн тăсăлса выртакан окоп патне пыраť. Окоп ăшĕнче—самурайсем [illegible]. Кузнецов вĕсем [illegible] йăххăн кураť. Окопран гранатăсем ывăтаççĕ. Анчах вĕсем пĕртте вырнаçулă пулмаççĕ, танк нимĕн те сийенленмен.

Снарйадсем окоп çине—виççĕ снарйад пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра ÿкеççĕ, çĕленсем, урнă йытăсем çуйахма тытăнчĕç, окоп тĕпне лăпчăна-лăпчăна выртрĕç.

— Танк окоп çывăхне пырса тăчĕ,—каласа параť Кузнецов йулташ,—пулеметран пеме пуçлатăп. Пахатăп, киревсĕрскерсем чейеленеççĕ. Башнĕне çавăрнине сăнаççĕ. Кураççĕ, епĕ башнĕне окопăн сылтăм йенне тытатăп, унчухне вăл йенчисем çĕр çумне выртаççĕ, сылтăм йенчен çĕкленсе танк çине гранатăсем ывăтаççĕ. Ну, шутлатăп, çĕленсем, сире вĕрентетĕп. Башнĕне хуллен сылтăм йеннеле çавăратăп. Пăхатăп, сулахайран йапонĕцсен киревсĕр сăн-пичĕсем çĕкленеççĕ. Башнĕне сулахайала хăвăрт çавăратăп та çавăрса илнĕ çуран çара пулеметран çунтаратăп. Самурайсем хăраса ÿкрĕç пулас, вĕсем пичĕсене урăх кăтартмарĕç те. Çакăн хыççăн танк окоп çинех пырса тăчĕ. Окоп тĕпĕнче вуншар самурайсем вилсе тăкăннине курсан, пирĕн чĕресем хаваслăн тапма пуçларĕç.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронтăн бойецĕсемпе командирĕсем, тĕлĕнмеле хăйулăхпа, паттăрлăхпа, ăслăн та чейелĕн çапла çĕмĕрсе тăкаççĕ ĕнтĕ Йапони захватчикĕсене. Пирĕн тăса çĕре пĕр вершук чухлĕ те пулин тытса илме хăтланакансене—каçару çук тата пулмасť те.

Г. Дворецкий.

„На защиту родины“ хаçат. № 6. 1938 ç. августăн 12-мĕш.

ПОЙЕДИНОК

Тул çути килнĕ вăхăтра комсомолĕц Барабанăв йертсе пыракан танк задани илнĕ—самурайсен пралук картисене татса кĕмеле те вĕсен пулемечĕсене, батарейĕсене пĕтерсе тăкмала. Йапонĕцсем Барабанăв йулташ машинне артиллерирен калама çук хыттăн пенипе кĕтсе илнĕ. Вĕсем танк çине вунпилĕк снарйад ытла кăларса йанă, анчах Барабанăвăн хăвăтлă машини малалах пынă. [illegible] пулемечĕсем хыттăн çунтарнă.

Малала пынă чухне танк сасартăк лачакала вырăна кĕрсе ларнă. Самурайсем, шăнасем пекех, танк çине ыткăннă, анчах та вĕсен шанчăкĕ пурнăça кĕреймен. Вĕсем танк çывăхнерех пыма ĕлкĕрсенех, пулеметран кăларса йанă нумай пульасем вуншар çынсене утă çулнă пек çулса тăкнă. Нальотчиксем кайала тарнă. Çакăн хыççăн танк çине артиллерирен пур йенчен те пеме пуçланă. Самурайсенчен хăшпĕрисем танк патне вăрттăн шуса пырса, унăн резинăран тунă катокĕсене чĕртсе йама ĕлкĕрнĕ иккен.

— Çук, çĕленсем, парăнмастпăрах!—кăшкăрнă Барабанăв.

Вăл машинă ăшĕнчен сиксе аннă та, танк çывăхĕнче тăракан виçĕ йапонĕца персе вĕлернĕ, хăй машинăна сÿнтерме тытăннă.

Барабанăва пулăшма ун патне башнĕ çинчи стрелок, комсомолĕц Шакирйавый çитсе тăнă.

— Ăçта?—ыйтнă командир.

— Çапăçулă задачăна пĕрле пурнăça кĕртрĕмĕр, кирлĕ пулсан, тăван çĕршывшăн пĕрле çапăçса вилĕпĕр,—лăпкăн ответленĕ Шакирйавый.

Тепĕр темиçе мунутран вут тивсе илнĕ танка хÿтă йанă та каллех малала, тăшман çинеле кайнă. Кусне телескоп прицелĕ патне тытса, Шакирйавый тăшманăн танка хирĕç перекен туппи çине тĕлленĕ. Вăхăтпа усă курса, вăл спуск педалĕ çине пуснă. Темиçе черет пенĕ хыççăн, тăшманăн танка хирĕç перекен туппи, унпа пĕрле самурайсем хăйсем те йалтах вĕçнĕ пек саланса, сирпĕнсе кайнă.

Г. Мусинăв.

„На защиту родины“ хаçат. № 10. 1938 ç. августăн 16-мĕш.

Командир Ольховик Йапонин батарейне тата унăн икĕ ротă салтакĕсене пĕтерсе тăкнă

Ĕнер елĕр, августăн 9-мĕшĕнче пирĕн артиллери Мантокусан патĕнче Йапони батарейне тата унăн икĕ ротă салтакĕсене пĕтерсе тăкнă,—тесе çыртăмăр. Айаларах епĕр çак çапăçу çинчен тĕплĕн пĕлтеретпĕр. Çапăçу задачисене Лебĕдĕв йулташ комиссар пулса ĕçлекен чаçри батарей командирĕ Ольховик йулташ пурнăçа кĕртнĕ.

Çак ĕçе пурнăçа мĕнле кĕртнĕха? Ольховик йулташ, сăнама йурăхлă вырăн суйласа илсе, Йапони артиллерийĕн тактикине тĕплĕн пĕлме тытăннă.

Сăнаса тăрса, вăл тăшманăн батарейĕ икĕ сопкă хушшинче тăнине палăртнă.

Тупăсене çÿлĕ вырăна илсе хăпартса, вĕсем виçĕ хутчен пенĕ те тупăсене ал вĕççĕн çĕклесе кайала хĕсĕк вырăна антарнă.

Ольховик йулташ çакна шута илнĕ, йапонĕçсем батарейа вырăнан тапратма тытăнсанах, вăл шанчăклăн командă панă: „Высота такая-то, прицел такой-то. Огонь!“,—вара йапонĕçсен батарейне пĕтернĕ.

Ун хыççăн вăл Йапонин шыв урлă каçакан икĕ роти çине персе, вĕсене те пĕтерсе тăкнă.

Ольховик йулташ йертсе пыракан артиллери подразделенийĕ малта пыракан подразделенисенчен пĕри шутланаť. Кунта çапăçулă условисенче партипе комсомол пурнăçĕ çăлкуç пек тапса тăраť.

...Çапăçусем хыттăн пынă çĕрте те комсомолĕцсен пухăвĕ пулаť. Комсомола илме ыйтса пана зайавленине пăхса тухаççĕ.

Сасартăк çурмабатарей командирĕ командă параť: „Çапăçува!“,—пуху вăхăтлăха чарăнаť, тăшман çине тĕл персе, ăна пĕтерсе тăкмала. Темиçе хутчен залп тунă хыççăн пуху каллех ĕçе тытăнаť.

Груздĕв тата Мамонăв.

„На защиту родины“ хаçат. № 5. 1938 ç. августăн 11-мĕш.

ЛЕЙТЕНАНТ ГАЛИМĂВ

Лейтенант Галимăвпа епĕ Заозернайа высота патĕнче, мир тусан иккĕмĕш кунĕнче тĕл пултăм. Ман умра ытлах çÿлĕ мар, сарлака хулпуççилĕ çын тăраť. Гимнастĕркă увăн тулли ÿтлĕ келетки çумне тачă çыпçăнса тăраť. Вăл ывăннă пек курăнаť. Анчах вăл кулнă чухне, унăн куçĕсем ăна йалтах урăх сăн пăраççĕ: хаваслă та савăнăçлăскер. Çакă вăл—Галимăв.

Çак вăхăтра, епĕ унпа пулса иртнĕ çапăçусем çинчен калаçса тăнă вăхăтра, унăн ывăннă питкуçĕсем тимлĕхпе тулса лараççĕ, куçĕсем тем çинчен шухăшланă пек инçете пăхаççĕ. Анчах та вăл каллех савăнăçлă, вăл хăй вĕрентсе ÿстернĕ бойецсем самурайсен çарĕсене хăйсен территоринчех çĕмĕрсе тăкни çинчен çĕкленÿпе каласа параť.

— Есĕр Вотин пулеметчик çинчен ыйтатăр-и? Епĕ ăна лайăх пĕлетĕп вĕт. Вăл Йапони захватчикĕсем çине калама çук хыттăн персе тăнă. Епĕ çак самантра хĕпĕртесе савăнни пекки манăн пурнăçра нихăçан та пулман. Манăн подразделенинчи бойец вĕт-ха—хăйулăскер, ĕçе çине тăрса тăваканскер.

Лейтенант Галимăв хăйĕн подразделенинчи пур бойецсем çинчен те, вĕсем СССР чиккисене йепле паттăррăн тăрса сыхлани çинчен сирĕ йăлтах каласа парĕ.

Анчах батальйон Йапони захватчикĕсене çирĕп отпор пана çĕрте вăл хăй мĕнле вырăн йышăнни çинчен сахал калаť.

Анчах лейтенант Галимăв, тăван çĕршывăн патриочĕ, çапăçусенче мĕнле вырăнта тăрса вăрçни çинчен пĕлме кирлех.

... Батальйон тăшман çине темиçе хутчен те атака турĕ, лейтенант Галимăв пур чухне те малти ретре пулчĕ. Бойецсене вăл çĕклентерсе хавхалантарчĕ, вĕсем пĕр шикленмесĕр малала, тăшман çине тапăнса пычĕç, ăна хупăрласа илчĕç. Вăл атакăсене тума çăмăллах пулмарĕ, анчах та вĕсем çĕнтерме пулăшрĕç. Тăшман кайала чакрĕ. Батальйон тăшмана унăн территорийĕ çинчех çунтарма тапратрĕ.

Çав çапăçура Галимăв подразделенийĕ çапăçура хăй пуçарса, йертсе пычĕ. Вăл Йапони окопĕсенчен темиçе метр айакра çеç пулнă. Тăшман ним йĕркесĕр, хыттăн персе тăнă. Вăл кайала чакасси çинчен шутламан та пулас.

Лейтенант Галимăв—малта пыраť. Унăн пĕр йенче противогаз сумки, ăна Мильс гранатисемпе тата 1914 çулти образецлă гранатăсемпе тăп туллийĕх тултарса лартнă. Акă бойецсем тата лейтенант, шăтăк-çурăклă вырăнсемпе тăшман окопĕсем патне шуса пынă та, ун çине гранатăсем пăрахма пуçланă. Гранатăсем ÿксе çурăлнипе çĕр кисренсе тăраť. Хыттăн хăраса ÿксе ăнран кайнипе тата вĕçĕмсĕр нумай çухатусем туса, захватчиксем окопсенчен тухса тараççĕ.

Тĕттĕмлене пуçласан тăшманăн сылтăм йенчи окопĕнчен пулеметпа пĕме пуçлаççĕ. Унăн пульисем наступлени туса пыракансен флангĕ çине ÿкеççĕ. Лейтенант Галимăв васкавлă решени йышăнаť. Вăл тăшман окопĕ патне вăрттăн шуса пыраť. Снарйад ÿксе çурăлнипе варинке йеверлĕ пысăк шăтăк пулса йулнă, вăл пытанса ĕçлеме лайăх хÿтлĕх пулнă. Кунта вăл план тăваť—тăшманăн пулемет расчотне пĕтерсе лартмала, ăна наступлени тăвакансем çине пеме памала мар. Хайĕн планне вăл хăйулăн пурнăça кĕртнĕ. Çав шăтăкран пуçне хуллен çĕкленĕ те, вăл пулемет унран инçе маррине курнă. Пистолетран икĕ хутчен тĕл пенĕ те, пулемет шарлами пулса ларнă. Ыттисем çывăха пыма хăранă.

Çĕрлехи тĕттĕм сăн хăвăрт персе çитнĕ. Пересси хăвăрт та хăвăрт пулса пынă, анчах часах чарăнса ларнă. Галимăв хÿтлĕхрен тухма пултарайман. Унран инçех мар тăшманăн снайпĕрĕ пытанса выртнине вăл сиснĕ. Вăл мĕн тул çуталиччененех çавăнта ларма шутланă, ирхине наступлени пуçланассине пĕлнĕ. Тăшман та çывăрман, вăл хăйулă лейтенант çине гранатăсем пăрахма шут тытнă.

Тăшман окопĕнчен Галимăв патнеле гранатăсем ыткăннă. Вăл гранатăсене сывлăшра пынă çĕрте йарса илсе, вĕсене кайала ывăтнă. Гранатăсем малтан вĕсене ăçтан ывăтнă, çавăнта хыттăн ÿксе çурăлса кайнă. Çавăн пек пынă лейтенант Галимăвăн пойединокĕ. Вăл пĕр сехет хушши тăшманăн пĕр подразделенине хирĕç çапăçнă.

Командовани лейтенант Галимăва вĕлернĕ тесе шутланă, анчах ирхине, наступлени пуçлансан тата тăшмана окопсенчен хессе кăларсан, наступлени тăвакансем хăйсен лейтенантне курах кайнă, вăл часах вĕсемпе пĕрлешсе, каллех наступленине кайнă.

* * *

Лейтенант Галимăв подразделенийĕ малта пыракан подразделени шутланаť. Вăрçă ĕçĕсем пуçлавиччен темиçе кун малтан вăл подразделени комсомолĕцсен подразделенийĕ пулса тăнă, лейтенант хăй нумайах пулмасť партине илме зайавлени панă. Подразделенире пур бойецсемпе командирсем те ленинла комсомол йалавĕ айĕнче тăрса тăшмансемпе çапăçнине пысăк чыслăх вырăнне хурса шутлаççĕ.

Бойецсем лейтенант Галимăвăн çапăçу пуçланас умĕн пулнă митингра калана сăмахĕсене асра тытаççĕ.

— Епĕ, подразделени командирĕ пулса, пирĕн подразделени малта пыракан пултăр тесе, мĕн пур вăйа хурса ĕçлетĕп, Сталин йулташ йачĕпе тăшмана епĕр унăн территоринчех пĕтерсе тăкăпăр,—тенĕ. Çакна пурнăçа кĕртнĕ.

Бор. Ривчун.

„На защиту родины“ хаçат. № 10. 1938 ç. августăн 16-мĕш.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Комсомолĕцсем малти вырăнта

КАНАШ. Комсомол 20 çул тултарнине райоври комсомол организаци пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленет. Вакунсем йусакан савăтри комсомолĕцсем уйав йачĕçе хăйсем çине илнĕ обйазателствăна хастарлăн пурнăçласа пыраççĕ. Акă, механически цехри слесăр Гаврилăв август уйăхĕнчи производствă планне 201 процент, Барский слесăр 189 процент, фрезеровщик Казаков 279 проц. тултарчĕç. Демйанков комсомолĕц кулленхи ĕç нормине 250 процент тултарса пыраť. Халĕ ăна токăртан таварнăй комбинат мастăрне куçарнă. А. Константинăв (токăр), В Богачов (стольăр), Л. Наумăв (слесăр) комсомолĕцсем кулленхи ĕç нормине 225—250 процент тултараççĕ.

Савăт дирекцийĕ комсомолĕц-стахановĕцсене ответлă вырăнсене лартма тытăнчĕ. Оника йулташа мастăртан урапа цех начальникне, Леонтйĕв йулташа мастăртан рессорно-пружиннăй цех начальникĕн заместителне лартнă. Кулленхи нормăна 250 процента йахăн тултарса пыракан станочницăна, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутатне Йе. А. Антонăвă йулташа древцехăн мастăрне куçарнă. Ĕçре вĕсем пурте лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Транспăртри комсомол организацисем те социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма анлăн сарса йачĕç. Çак кунсенче çамрăксенчен стахановĕцсен хисепĕ 38 çынна, ударниксен хисепĕ 97 çынна çитрĕ. Çидăрăв, Терентйĕв, Назарăв, Денисăв, Долгов комсомолĕцсем техекзамĕна отличнă паллăпа тытрĕç. Производствă нормине те вĕсем 200—250 процент таран тултараççĕ. Иртнĕ уйăхра комсомол ретне 12 çынна илнĕ, парти ретне куçарма 4 комсомолĕца рекомендаци панă.

Чакаçри комсомол организаци çамрăксенчен 13 çынтан бригада организацилесе, Канаш—Шупашкар чукунçул строителствине ĕçлеме йанă. Комсомол комитечĕ çамрăксем хушшинче лайăх ĕçлет. Август уйăхĕнче 16 çамрăка комсомол ретне илнĕ, вĕсенчен хĕрачасем 6.

Ив. Малов.

Райком инструктăрĕн ĕçĕсем

ПСК(б)П Трак райкомĕн инструктăрĕ Степанăв Н. С. виçĕ уйăх çеç ĕçлет пулсан та, хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене [illegible]. Хăйĕн ĕçне йуратса тăраť.

Унăн участкинче „Большевик“ [illegible] тата НКВД районотделенинчи пуçламĕш парторганизацисем кĕреççĕ. Вĕсенче 9 коммунис.

Колхоз производствинче пуçламĕш парторганизацисем çук. Пĕччен коммуниссем Исакăвăра парти членĕ 1, кандидат 1. Анчах вĕсем производствăра ĕçлемеççĕ.

Степанăв участкине кĕрекен коммуниссем пурте парти кружокĕсенче вĕренеççĕ.

Иртнĕ çулсенче ку участкăра партине пĕр çын та илмен. Халĕ, Степанăв Н. ĕçлеме пуçланăранпа, Исакăвă йалĕнче Йурйĕв комсомолĕца парти кандидатне илнĕ.

Участкăра комсомол пуçламĕш организацисем 9, вĕсенче 83 комсомолĕц. Степанăв йулташ комсомол организаци руководителĕсене ĕçре пулăшса пыраť. [illegible] вăл общественнăй организацисене те ([illegible], СВБ, МОПР) вĕсен ĕçне майахлатма пулăшаť.

Степанăв йулташ хăйĕн пĕлÿне те хăпартсах пыраť.

Унăн малашнехи ĕçре парти ретне колхоз производствинче лайăх ĕçлекен колхозниксен шучĕпе ÿстерсе пырасси çине хытăрах пăхмала. Партире тăман актив хушшинчи ĕçе вăйлатмала. Пуçламĕш парторганизацисенче парти пухăвĕсене лайăх хатĕрленсе вăхăтра иртермеле тăвас пулаť.

Уйрăмăнах пур коммуниссемпе комсомолĕцсене, партире тăман актива ПСК(б)П историне çĕнĕ учебник тăрăх вĕрентес ĕçе организацилемеле.

Закамский.

Йăнăша тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕн“ кăçалхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухнă П. Перлов çырнă „Парторганизацисен тунă йăнăшсене хăвăрт тÿрлетмеле“ статйара ПСÇЛКС Куславкка райкомĕнче ĕçленĕ А. Н. Наумăв йулташа елекçĕ тенĕ.

А. Н. Наумăв йулташа елекçĕ теме нимĕнле сăлтав та пулман. Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн уголовнăй ĕçсене пăхакан Кассаци Коллеги августăн 22-мĕшĕнче А. Н. Наумăв ĕçне пăхса, çакна палăртнă: Наумăв ПСÇЛКС Куславкка райкомĕн çекретарĕ пулнă Петров çинчен, унăн çитменлĕхĕсене кăтартса тĕрĕслеме ыйтса, ПСÇЛКС Ообком çекретарĕ патне çыру йанă. Унта вăл Петров йулташа тăшман темен. Çавăн пекех вăл тата 1937 çулти çентаберĕн 29-мĕшĕнче ПСÇЛКС райком бÿровĕнче Петров йулташ ĕçĕсене критикленĕ. Анчах Петров çинчен çырнă заметкăсен автăрĕ А. Н. Наумăв пулман.

Çаксене хисепе илсе, Касколлеги Куславкка районĕнчи халăх сучĕ Наумăв йулташа айăпласа йышăннă пригăвăра пăрахăçа кăлармала, Наумăва айăплакан ĕçе пĕтерсе лартмала тунă.

Депутат ĕçре

ЕЛĔК районĕнчи почтăна кашни кунах тенĕ пек депутат йачĕпе çырнă çырусем килеççĕ. Суйлавçăсем çыравĕсенче хăйсен ĕçĕсем çинчен тата мĕнле те пулин çитменлĕхсем çинчен çырса пĕлтереççĕ. Йангурасри „Звезда“ колхоз членĕ, иртнĕ çулта Хĕрлĕ Çара кайнă красноармейĕц Йегорăв йулташ Меценатăвă дупутат патнă çыру йанă. Хай çыравĕнче вăл Хĕрлĕ Çар ретĕнче питĕ лайăх пурăнни çинчен тата ПСК(б)П кандидатне кĕни çинчен хаваслăнса пĕлтерет.

Çавăн пекех Уçтă йалсоветĕнчи Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозран Хĕрлĕ Çар ретне кайнă красноармейĕц Максимăв та çыру йанă: „Иалтан çырса пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн колхоз председателĕ Клементйĕв ĕçе йапăхтарса йанă. Çавăнпа та епĕ сирĕнтен ĕçе тĕрĕслесе пăхма ыйтасшăн“,—тесе çырнă вăл. Депутат Меценатăвă ĕçе тĕрĕслесе тухсан, Максимăв патне ответ йанă. Клементйĕв çинчен парти организацинче сÿтсе йавнă. Ĕçе йапăхтарса йанăшăн, пичет сухатнăшăн йатламала тунă.

Меценатăвă çакăн пек жалабăсемпе çырусене хирĕç вăхăтра ответ параť. Иштек колхоз колхозницĕ хăйне упăшки Т. хĕнени çинчен çырса панă. Кун хыççăн Меценатăвă йулташ колхозницă упăшкипе калаçнă. Тĕрле çаккунсемпе паллаштарнă, ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Депутат Меценатăвă хăйĕн суйлавçисемпе пĕр майах çыхăну тытаť, ĕçре пулăшса пыраť. Иртнĕ çулта Тукташ, Ильйанкă колхозĕсем начар ĕçлетчĕç. Меценатăвă ку колхозсен ĕçне сăнаса пычĕ. Ĕçре мĕнле çитменлĕх пуррине палăртрĕ. Вăл пулăшса пынипе çак колхозсем районри малта пыракан колхозсен шутне кĕчĕç.

Хальхи вăхăтра ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене вĕренесси пыраť. Меценатăвă йулташ Çесси решенийĕсем çинчен Йаркунькинăри „Майак“ колхозра ăнлантарса пачĕ.

Депутат Меценатăвă суйлавçăсен ыйтăвĕсене пурнăçлама, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшаť.

В. Йефремăв.

Депутат—сменă мастăрĕ

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтăн йăвăç каскалакан комбинатĕнчи работницă РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Йекатеринă Антонăвнă Антонăвă йулташ чи лайăх стахановкă шутланаť. Ĕçре калама çук пысăк çитĕнÿсем тунăшăн, ĕçĕн социалисăмлă формисене кăтартса панăшăн халь Антонăвă йулташа йăвăç каскалакан цехра сменă мастăрĕ пулма çирĕплетнĕ.

Унпа пĕрле ĕçлекен Шурă Йемелйанăвă çапла калаť:

— Й. А. Антонăвă—пирĕн пĕрремĕш стахановкă. Ăна сменă мастăрĕ пулма лартнине епĕ производствăра çĕнĕ рекордсем тунине тата хăмăн квалификацине ÿстернипе пиллĕ тăватăп.

В. Ласточкин.

Кĕрхи çĕртме тума вăхăт

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кăçал кĕрешсе пыни кирлĕ. Тухăçлă çуртрисем туса илессинче кĕрхи çĕртме туса хăварни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн республикăри колхозсен кăçал 280 пин гектар çинче кĕрхи çĕртме туса хăвармала. Анчах, халь пирĕн республикăра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пуçланманпа пĕрех темеле. Çентаберĕн 1-мĕшне 6.205 гектар çинче кĕрхи çĕртме туса, плана 2 процент ытларах кăна тултарнă. Машинă-трактăрлă станцисен трактăрсемпе 208 пин гектар кĕрхи çĕртме тумала пулсан, çентаберĕн 1-мĕшне 4.191 гектар сухаласа, плана 2 процент çеç тултарнă.

Улатăр, Канаш, Ишлей, Вăрмар тата Шăмăршă районĕсенчи МТС-сем ку вăхăтчченех трактăрсемпе кĕрхи çĕртме тума тытăнман. Ытти машинă-трактăрлă станцисем те çĕртме тăвас плана 0,6 процентран пуçласа 6,7 процента çитиччен çеç тултарнă. Пĕр Тутаркас МТС кăна çĕртме плание 10 процент пурнăçланă.

Малта пыракан колхозсем тырпулсене уйăран пуçтарса кĕнĕ хыççăнах кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕç. Кольцовкăри (Вăрнар р.) Сталин йачĕпе тăракан колхоз çак кунсенчех çитес çулта çуртрисем акмалли участкăсенче кĕрхи çĕртме туса пĕтерет. Атнашри (Шăхасан р.) Кирăв йачĕпе тăракан колхозри бригадăсенче те хĕрсех кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Ку тĕлĕшпе В. Степанăвă бригади малта пырать. Çĕртме тума тытăниччен кирлĕ чухлĕ тислĕк, ытти удобрении сене кăларнă.

Кĕрхи çĕртмене пысăк пахалăхпа туса хăварасси кашни колхоз умĕнче тăракан задачă. Çĕртмене мĕн чухлĕ лайăхрах сухалатăн, çавăн чухлĕ вăйлă тырпул туса илетĕн.

Кĕрхи çĕртме тăваççĕ

Шăматри (Йетĕрне р.) „Ударник“ колхоз кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕ. Кĕрхи çĕртме тума тухиччен тислĕксене тата ытти удобренисене уйа кăларнă. Ку вăхăтчен пурĕ 40 гектар çинче кĕрхи çĕртме тунă. Çитес çулта çуртрисем акмалли участкăсене колхоз кăçал пĕтĕмпех сухаласа хăварать.

С. Важорăв.

Пайан тумали ĕç

Çентаберĕн 1-мĕшне государствăна сĕт-çу памали çулталăк планне республикă 82 процент тултармала пулнă пулсан, çав вăхăт тĕлне 64,3 процент анчах тултарнă. Сĕт-çу парас йенĕпе лайăх ĕçлекен Иелчĕк районĕ те çулталăк планне 78 процент кăна тултарнă.

Вăрмар, Патăрйел, Трак, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай районĕсем государствăна сĕт-çу тăратас ĕçре улшăнусем тăваймарĕç. Районсем сĕт-çу парассипе кайа йулса пыни маслопромран та килнĕ. Вăл Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсене квитанцисемпе списăксене вăхăтра çитерсе параймарĕ. Çавна май районсенче учот ĕçĕ йапăх пулса пырать. Учот начар пулнипе мĕн чухлĕ памалисем курăнмасăр тăраççĕ. Елĕк районĕнче, çу савăчĕ пĕлтернĕ тăрăх, государствăна сĕт-çу парас плана 57 процент тултарнă, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ пĕлтернĕ тăрăх 20 процент тултарнă. Çапла вара çулталăк планне 37 процент тултарнине кăтартакан списăксемпе квитанцисем çук. Чăвашсен çу трестĕн управляйушчийĕ Комаров йулташа районсенчи учот ĕçне лайăхлатма кирли çинчен темиçе хутчен те пĕлтернĕ, анчах улшăну туни курăнмасть-ха.

Çавнашкалах, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсем государствăна сĕт-çу парас плана тултарас тесе тăрăшса ĕçлемен. Вĕсем çу савăчĕсенче учот ĕçне йĕркелеме пулăшман.

Ĕнесенчен сĕт суса илес вăхăт иртсе пырать. Халь пирĕн тата государствăна 30 процент ытларах сĕт-çу памала. Çавăнпа та ĕнтĕ ку тĕлĕшпе пирĕн вирлĕн ĕçлемеле.

Районри уполномоченнăйсен çу савăчĕсене тĕрĕслесе, пулăшса пымала. Халь кашни савăтра, сепаратăр пункчĕсенче кунне икĕ хутчен сĕт йышăнассине йĕркелемеле.

Трак, Шăхасан т. ыт. районсенче те государствăна çу халĕн параççĕ. Анчах вăл районсенче те çу пуçтарас ĕç чаплăн пымасть-ха.

Государствăна сĕт-çу парас йенĕпе йалсоветсен, колхозсен çине тăрсах ĕçлес пулать.

Парса татнă

Йанкас (Трак р) йалсоветне кĕрекен Тельмăн йачĕпе тăракан колхозра 7 çул хушши ĕнтĕ сысна ферми ĕçлет.

1938 çулта 6 уйăх хушшинче фермăран 4.200 тенкĕ тупăш илнĕ. Фермă йенĕпе государствăна аш-какай парас плана ийуль уйăхĕнчех тултарнă. Çакна май колхозниксем государствăна аш-какай парас йенĕпе льготă илчĕç.

А. Митрофанăв.

Нормăна иртерсе тултарать

Çĕрпÿ районĕнчи колхозсенче авăн çапас ĕç хĕрÿлĕн пырать. Анат Кипекçи тата Аслă Тивĕш йалсовечĕсенчи колхозсенче авăн çапас тĕлĕшпе МТСтанцин трактăр бригади ĕçлет. Çак бригадă авăн çапмали нормăна ытлашшипех тултарса пырать. Молотилкăпа ĕçлекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. С. Петров машиновед пĕр сменăра 12 тоннă таран çапать.

Комиссарăв йертсе пыракан трактăр бригади „Молот“, „Актай“, „Ĕмĕт“ колхозсенче авăн çапса пĕтерчĕ. Халь çак асăннă колхозсем кантăра шыва хутса пултарма тытăнчĕç.

А. Иванов.

Авăн çапса пĕтернĕ

** Çĕрпÿ районĕнчи „Вучах“ колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Авăн çапассипе виççĕмĕш бригадă (бригадирĕ Филиппăв) мала тухрĕ.

Колхоз кăçал тырпул тухăçлăхĕ мĕн чухлĕ пулнине татăклăн шутласа тухрĕ. Вăтам шутпа гектартан ыраш 20 центнĕр, кĕрхи тулă 25 центнĕр, çурхи тулă 18 центнĕр туса илнĕ.

„Вучах“ колхоз государствăна тата машинă-трактăрлă станцине тырă парса татнă.

И. Йефимăв.

** Хĕрлĕ Чутай. Шĕмшешри „Мотор“, Мăн Йăвăшри Сталин йачĕпе тăракан, Егменти „Мотор“ колхозсем итем çинчи тырпулсене кĕлетсене пуçтарса кĕчĕç. Çак колхозсем государствă умĕнчи парăмсене те парса татнă. Халь пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕме хатĕрленеççĕ.

И. Самарин.

** Куславкка. Амачикри „Динамо“ колхоз тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе ытти колхозсенчен малта пычĕ. Çавнашкалах авăн çапас ĕçе те ыттисенчен маларах вĕçлерĕ.

Çак кунсенче „Динамо“ колхоз кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕ.

В. Ваньушков.

** Трак. Упири „Коминтерн“ колхоз авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă хыççăн колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх аванс шучĕпе тырă тата 5 пин тенкĕ укçан валеçсе панă. „Коминтерн“ колхоз колхозниксене ĕçкунĕсене тĕплĕн шутласа тухса, тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленет.

А. Киçельов.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинчи стаханăвла çирĕмкунлăх

Значкист Зайцĕв бригади малта пырать

(Хамăр корреспондентран)

Антон Зайцĕв йулташ Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинче иккĕмĕш çул ĕçлет. Малтанхи вăхăтра вăл çĕр чавнă çĕрте, унтан шпалсем, рельсăсем йатнă çĕрте ĕçленĕ. Ун чухне вăл чукунçул ĕçне пĕлмен. Анчах йăвăр тесе пăчах та пуçа усман, хушнă ĕçсене йĕркелĕн пурнăçласа пынă.

Халĕ Зайцĕв йулташ бригадир пулма тивĕçлĕх илчĕ. Кăçалхи ийуль уйăхĕнчен пуçласа вăл шпал айĕсене тикĕслекенсен бригадиренче ĕçлет. Бригадă малтанах нормăна тултарса пырайман. Халĕ ĕнтĕ бригадă членĕсем техминимум кружокĕсенче вĕреннĕ май, ĕç метăдне лайăх пĕлсе çитрĕç. Кашни çын хăйне панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлать.

Зайцĕв бригадинче 12 çын. Вуникĕ çын ĕçленипе кашни кун 16 звено тикĕслемеле. Кăна вĕсем ытлашшипех пурнăçа кĕртеççĕ. Хăшпĕр кун 20 звено тикĕслеççĕ.

— Епĕр кунне 30 звено тикĕслеме пултаратпăр. Пире çителĕклĕ таран ĕç паччăр, — тет бригадир Зайцĕв йулташ.—Час-часах лини тăврашĕнчи çĕре чавман пирки ку ĕçе хамăрăн тумала тивет. Çавна май вара епĕр хамăрăн ĕçре йаланах ĕçлейместпĕр. Çакна малашне йĕркелемеле.

Зайцĕв йулташ 45 çулта. Вăл пур ĕçре те малта. Ĕçе лайăх вĕренсе çитнĕскер, бригадă членĕсене хăйĕн опычĕсем çинчен каласа парать, *бригадă ытти бригадăсенчен* малта пырать. Ăна кăçал „Ударнику Сталинского Призыва“ йатлă значок парса парнеленĕ.

Стаханăвла çирĕмкунлăхра Зайцĕв йулташ бригади ĕçре татах та паха тĕслĕхсем кăтартма обйазателствăсем илсе, Мефодйĕв йулташ бригадине ăмăртăва чĕнчĕ.

Хар. Лисин.

Икшер нормă тултаратăп

1937 çулти майăн 29-мĕшĕнче епĕ Хусантан Шупашкара килтĕм те, Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинче ĕçлеме пуçларăм. Манăн тĕп специальнăç—стольар, анчах епĕ жестаншчик ĕçне те пултаратăп. Шупашкар станцинче ĕçлеме пуçласанах нормăна 120—140 процент тултарса пыма тытăнтăм. Манăн ĕçе йаланах лайăх тесе йышăнаççĕ. 1937 çулти ийулĕн 30-мĕшĕнче—чукунçул çинче ĕçлекенсен сталинла кунĕнче мана костюмпа премилерĕç.

Çакăн пек хисеп туни мана тата та ытларах хавхалантарчĕ. Пирĕн çĕршывра ĕçлекен çын пысăк хисепре. Епĕр, ирĕклĕ çĕршывăн ĕççĕн çыннисем, капиталиссемшĕн мар, помешчиксемшĕн мар—хамăршăн, хамăр тăван çĕршыва тата та ытларах ырлăх парас, хăватлăрах тăвас тесе тăрăшатпăр. Ака менщĕн пирĕн ĕçтухăçлăхĕ пысăк. Халĕ ĕнтĕ епĕ стаханăвец, кунсеренех икшер нормă тултарса пыратăп.

Стаханăвецсен ĕçĕнче темĕнле „çекрет“ çук. Ĕçленĕ вăхăтра пĕр минут та ахаль сайа ан кайтăр, ĕç вырăнне, материалсене, инструментсене малтанах хатĕрлесе хутăр, ĕç техникине пĕлтĕр—вара кашни рабочи стаханăвец пулма пултарать. Епĕ çавăн пек ĕçлетĕп.

Манăн пурнăç условийĕ лайăх. Хам уйăхра 300 тенкĕ ытларах ĕçлесе илетĕп. Арăм та ĕçлет. Епĕ стаханăвла çирĕмкунлăхра тата та лайăхрах ĕçлеме пулатăп.

Стаханăвец Хазип Шайхутдинăв.

Коммуниссемпе комсомолĕцсен паха ĕçĕсем

Чукунçул строителствин 38-мĕш километрĕнче ĕçлекен коммуниссемпе комсомолĕцсем стаханăвла çирĕмкунлăх вăхăтĕнче рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе туса пыма çирĕп план тунă. Вăл план тăрăх кашни коммунис, комсомолĕц уйрăм бригадăра йе околодкăра ĕçлет. Степанăв йулташ виççĕмĕш околодкăри, Кандалăв йулташ хăйĕн бригадинче, Григорйĕв йулташ Ишлей патĕнчи околодкăра ĕçлекенсем хушшинчи культурăлă-массăлă ĕçшĕн ответлă.

Хальхи вăхăтра пур коммуниссем те тата комсомолĕцсем те хăйсен ĕçне пысăк активлăхпа туса пыраççĕ. Григорйĕв йулташ рабочисем хушшинче икĕ кунта пĕрре тĕрлĕ ыйтусем тăрăх доклад йе калаçусем туса иртерет. Чукунçул çине халь çеç килекен колхозниксене лайăххăн йышăнса илсе, вĕсене ĕç çинчен ăнлантарса пама хăй тавра комсомолецсене йавăçтарнă.

38-мĕш километрта ĕçлекен коммуниссемпе комсомолĕцсем политикăлă-массăлă ĕçе туса пырас тĕлĕшпе иккĕмĕш участкăра ĕçлекен коммуниссемпе тата комсомолĕцсемпе ăмăртăва тухнă.

Обйазателствăна пурнăçа кĕртеççĕ

Иккĕмĕш участкă. (Хамăр корр.). Стаханăвла çирĕмкунлăх пуçланас умĕн участкăри рабочисем, бригадăсем хăйсем çине татăкла обйазателствăсем илнĕччĕ. Нумайĕшĕсем хăйсем илнĕ обйазателствасене çийĕнчех ăнăçлăн тата пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртсе пыма тытăнчĕç.

Ака сăмахран, Некоз, Царев, Лавринăв йулташ бригадисем çентабĕр уйăхĕнче плана 250 процент тултарма пулнă. Хальхи вăхăтра вăл бригадăсенчи йулташсем пурте тенĕ пекех нормăсене тултарса пыраççĕ. Çентаберĕн 9-мĕшĕнче Лавринăв йулташ бригади 201 процент, Царев йулташ бригади 204 процент, Некоз бригади 211 процент тултарнă.

Строителствă управленинче

Ĕнер, стаханăвла çирĕмкунлăх пуçланнă кун, строителствă управленинчи инженерлă-техникăлă работниксем пурте участкăсем тăрăх саланнă. Строителствăна пыракан колхозниксене кĕтсе илме тата вĕсене ĕç вырăнне ăсатма 7 автомашинă уйăрнă, вĕсем халĕ участкăсенче.

Транспорпит строителствă участкисенчи ларйоксене 8 пин тенкĕлĕх атă-пушмак, 11 пин тенкĕлĕх çĕленĕ кĕпесем салатнă. Çак кунсенчех ытти суту-илÿ организацисем атă пушмак, чăлха, трикотаж, çĕленĕ кĕпесем 24 пин тенкĕлĕх илсе тухмала.

Çирĕмкунлăх хушшинче кашни участкăри рабочисем виçшер хут кино кураççĕ, пĕрер концерт итлеççĕ. Пĕррĕмĕш участкăри драмкружок спектакльсем лартса парать.

М. Йакимăв.

ИЛЕМЛĔ СĂМАХ ГЕНИЙĔ

Ленин хăйĕн Лев Николайĕвич Толстой çинчен çырнă статйине „Лев Толстой, как зеркало русской революции“ тесе йат панă (Ленин. Сочиненисем. XII том. 331—335 стр.).

Помещиксемпе капиталиссен стройне хăйăрран критиклессине „усала хирĕç тăмала мар“ тесе вĕрентнипе çыхăнтарнă Толстойăн произведенийĕсенчи, унăн пурнăçа хаклассинчи вĕрентĕвĕнчи хирĕçÿсене палăртса, Ленин çав хирĕçÿсем мĕншĕн пулнине ăнлантарса панă тата Толстой пирĕншĕн мĕншĕн аслă, мĕншĕн вĕçĕмсĕр паха пулса тăнине, çавăнпа пĕрлех тата унта мĕскер йутă, мĕскер пирĕншĕн усăсăррине нихăçанхи пек маруççăн кăтартса панă.

Ленин каласа панă тăрăх, Лев Толстой „вырăс пурнăçне никампа танаштармала мар сăнласа кăтартнă тата тĕнче литературин чи паха произведенийĕсене çырнă генилĕ художник пулса тăрать“ (Ленин. Сочиненисем. XII том. 332 стр).

Толстой çырса хăварнă произведенисем вырăссен XIX мĕш ĕмерти пурнăçĕн пур йенĕсене те вĕренме пулăшакан иксĕлми паха йапаласем вырăнĕнче шутланаççĕ. Аслă писател патша Российĕн пурнăçне пур йенчен те лайăх сăнласа панă. Толстой хăйĕн произведенийĕсен кашни йĕркипе çав пурнăç йĕрĕнмеле пулни çинчен, çынна çын пусмăрласа тăракан тĕнчере нийепле телей те, нийепле чăнлăх та пулма пултараймани çинчен систерет.

Толстой хăйĕн малтанхи вăхăтра çырнă „Детство“ тата „Отрочество“ йатлă паха произведенийĕсенчех Николенкă Иртенĕв урлă, çийелтен пăхсан—кăмăлла каймалла, илемлĕн курăнакан, чăннипе—улталлăн курăнакан пурнăçа критиклеме пуçланă. Ун чухнехи пурнăçăн йĕркисемпе килĕшменнине палăртакан кĕвĕ „Утро помещика“ тата „Казаки“ произведенисенче тата та хытăрах илтĕнет. Анчах икĕ повĕçĕн геройĕсем те пурнăçа пĕлсе йĕркелеме тăрăшни ăнăçсăрлăхпа вĕçленет.

„Анна Каренина“ романра Толстой буржуалă помещикла тавралăхăн обшчествăлă йĕркисемпе çемйе çыхăнăвĕсен суйалăхне тата ирсĕрлĕхне сăнласа кăтартать. Аннăн трагедийĕ револуциччĕнхи правасăрлăхпа тата суйалăхпа тулнă моралĕн тыткăнĕнче тапăçланакан вырăс хĕрарăмĕн трагедине пĕлтерет. Йĕрĕнчĕк бÿрократ Каренин романра „хайăр машина“ пек курăнать. Етем тискерлĕхпе пусмăрлăх тĕнчинче çеç çавăн пек пулма пултарать.

Толстой обшчествăн çÿлĕ сийĕсем харам-пырланса пурăннине кăтартнипе çеç чарăнса тăмасть. Вăл „Воскресение“ романра Российăри пурнăçăн пур йенĕсене те хăйăрран критиклет. Катушă Маслова витĕмлĕ сăнлăхĕ социаллă суйалăхпа пусмăрлăх çимĕçĕсем пулса тăнă пиншер хĕрарăмсен ăраскалне пĕтĕçтерсе кăтартса парать. Толстой буржуалă судăн комедине питлет.

Çавăн пекех, Толстой „Хаджи Мурат“, „После бала“ т. ыт. произведенийĕсенче те капиталисăмла цивилизацине тăрăшыв çине кăларать. „Хаджи Мурат“-ра николайĕвшчинăн ирсĕр сăн-сăпатне: „инородĕцсене“ тытса пусмăрлас политикăна, двор суйалăхне, Пĕррĕмĕш Микулайăн тискерлĕхĕпе йĕркесĕрлĕхне сăнласа панă. Пысăк ăсталăхпа çырнă „После бала“ произведенире салтаксенчен етемле мар мăшкăласа, вĕсене хĕнесе ватса пурăнакан войеншчинăн тискерлĕхĕсене витĕмлĕн çутатнă. Тĕлĕнмеле: пурнăçăн тĕттĕм йенĕсене йĕрĕнсе, тăрăхса çырса кăтартать пулин те, Толстой хăйĕн художĕствăлă пултарулăхĕнче типĕ моралист пулман. Художник пурнăçа йуратать, вăл саванăçсене сăнласа пама илемлĕ сăрсем тупать.

Етеме „çĕнетме“ май паракан çула шыраса, халăх патне—пултарулă вăйсен вăйлă çăлкуçĕ патне пырать. Толстой хăйĕн геройĕсене пурнăçа халăхран вĕренме хушать, вăл Платон Каратайĕв мужике хăйĕн йуратнă геройĕн Пйер Безухăвăн „учителĕ“ туса хурать.

Пирĕн тăван çĕршыв ытти çĕршывсене пăхăнмала мар пуласси шĕн кĕрешнин пысăк епопейĕ пулса тăракан „Война и мир“ романра Толстой вырăс халăхĕ çинчен калама çук пысăк йуратупа çырать.

Романра питĕ нумай çынсене, питĕ нумай „геройсене“ илсе кăтартнă. Анчах ку тĕлĕнмеле произведенин (Толстой ăна хăй авалхи грексен „Илиада“ епопейипе танлаштарнă) чăн чăн геройĕ вырăс халăхĕ пулса тăрать. Халăх, пĕр çын пек пулса, хăйĕн тăван çĕршывне сыхлама тухать. Унăн тăван çĕршывне Наполеонăн çарĕсем тапăнса кĕнĕ. Тăшмăнпа кĕрешессинче вырăс салтакĕсемпе партизанĕсем, хресченсемпе хула çыннисем хăйсен тĕлĕнмеле паттăрлăхне тата хăватне кăтартса панă. Толстой „Война и мир“ произведенинче йут çĕршывран килнĕ захватчиксене хирĕç массăсен тапăхăвĕ ÿссе пынине, вĕсем тăшмана çине тапăнса тухнине йĕркерен сăнласа пырать.

Бородино çыххăнĕнче пулса иртнĕ çапăçури вырăс салтакĕсен паттăрлăхĕ, хула çыннисен пысăк мар ушкăнĕ Мускав Кремльче харсăррăн сыхласа тăни, партизансен отрйачĕсем пĕр шиксĕр çапăçни—пурте вĕсем романра тĕлĕнмеле маçтăрлăхпа ÿкерĕнсе йулнă.

Аслă писател халăхăн тăван çĕре кирек мĕнле пулсан та сыхласа хăварас майпа пулнă харсăрлăхне мухтать. „Война и мир“ произведенине вулаканăн умĕнче халăх паттăрĕсен сăнлăхĕсем—аслă полководец Кутузăвран пуçласа Тихăн партизан таран, партизансен отрйачĕсене йертсе пыракан Денисăвран пуçласа, „тăшмансене ан лектĕр“ тесе, хăйсен утине çунтарса йаракан „тĕттĕм“ хресченсем—Власпа Карп таранах йăркеленсе иртеççĕ. Событисемпе çынсене йышлăн илсе кăтартни вăйĕ йенчен, сăнласа кăтартнин вăйĕ йенчен, пурнăçа тарăннăн илсе кăтартни йенчен илсен, „Война и мир“—тĕнче литературинче пĕррĕмĕш вырăнта тăракан произведени.

Толстой çырса хăварнă романсенче вырăс пурнăçĕн сарлака картинĕсем ÿкерĕнсе йулнă. Обшчествăн тĕрлĕ сийĕсен йăли, тăван халăхăн историйĕ, вырăс çантталăкĕн картинĕсем, Толстойра никампа танлаштарма çук художнике тупнă. Унăн генийĕ тĕнче литературин пуйанлăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан произведенисене çырса хăварчĕ.

Толстойăн чĕлхипе,—тенĕ Ленин—„вырăс халăхĕн ун чухнехи пурнăçа курăймасăр пурăнакан, анчах вĕсемпе ăнланулăн, пĕр май, вĕçне çити, пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешесси патне çитеймен нумай мĕльйунлă массисем калаçнă“ (Ленин. Сочиненисем. XIV мĕш том. 407 стр.).

Толстойăн аслăлăхĕ вăл хăйĕн генилĕ произведенийĕсенче „вырăс хресченĕсен Российăра буржуалă револьуци пулас умĕн пуçтарăнса тăнă шухăшĕсемпе кăмăлĕсене палăртса панинче курăнать“. (Ленин. Сочиненисем. XII том. 333 стр). Толстой правителствă пусмăрне пĕр хăрамасăр хирĕçленĕ. Чиркÿн тата пупсен тăшманĕ пулса, вăл çапла каланă: „Епĕ хамăн ачава пупа тукатмăшла тĕшмĕшлеме париччен маларах йытăсене тулама паратăп“. Толстой православлăлă чиркĕве, чиновниксене, государствă тытăмĕн тата судăн комедиче питлесе çырнă статйисем вăрттăн издательсемпе пĕтĕм çĕршыв тăрăх саланса, патша правителствине нумай хурлăх кăтартнă. Самодержави Толстойран писнĕ. 1901 çулта ăна чиркÿрен уйăрса, турра хирĕç пыракан çыннăн йатне панă Чиркÿсе че пупсем ăна хирĕç ылханлă сăмахсем каланă.

Аслă гуманис—Толстой мире, культурăна, халăхсен туслăхне сыхлассишĕн пĕрре мар тухса каланă. Империалисла государствăсем йунлă вăрçăна хатĕрленнине тăрăшыв çине кăларса, Толстой çапла çырнă:

„...Пирĕн куç умĕнчех çавă мундирсемпе тата лентăсемпе ерешленнĕ, иртĕнсе кайнă çынсем, монарх тата министр йатне илнĕскерсем, парадсем, смотрсем, маневăрсем туса иртереççĕ, çав йĕркепе йатарласа хатĕрленĕ çынсене тăшман вырăнне шутласа персе вĕлерме, штыксемпе чикме хушаççĕ. Мĕншĕн епĕр çав çынсене лăпкăлăхра хăваратпăр, мĕншĕн епĕр вĕсем çине тапăнмастпăр, мĕншĕн çав пĕтĕм императăрсене, корольсене, министрсене, генералсене лăплантарса лартмастпăр? Вĕсем усал ĕç тума хатĕрленни епĕр вĕсене халĕ чарса лартмасан, усал ĕç, пайан мар-тăк, ыран пуласси паллă вĕт-ха“...

Çак сăмахсенче Толстой пирĕн ума капиталисăмла тĕнчене хăйăррăн питлекен çын пулса тухса тăрать. Ку сăмахсем халĕ вăрçă пуçарма хатĕрлекенсене, етемлĕхе хирĕç çĕнĕ тискер усал ĕç тума хатĕрлекен фашиссене айăкран мар, куçранах çапаççĕ. Толстой револьуционер пулман. Вăл, хăй капиталисăма критикленинче хресченсен сарлака массисен протестне палăртса, çав протест писсе çитменнине те, пĕр майăх револьуциленсе пыракан класс—пролетариат йертсе пыраймăн вăхăтри хресченсен организациллĕхсĕрне те палăртнă. Крепăстлă пусмăрăн ĕмĕрĕсем хресченсем хушшинче темĕн чухлĕ кураймантăх, тарăху тата харсăрлăх пухса çитернĕ, тесе çырнă Ленин. Хресченсем „обшчежитин çĕнĕ формисем“ патне туртăннă. Анчах вĕсем „вăл обшчежити мĕнле пулмаллине, ирĕклĕхе мĕнле кĕрешсе илмеллине, çав кĕрешÿре ăна йертсе пыракансем камсем пулмаллине ăнланса илмен. Хресченсен йухăмĕн çакă ансăрлăхĕ „усала хирĕç тăма кирлĕ мар“ тенинче, йăла тĕлĕшĕнчен харпăрхăй тĕллĕн вăталанассинче „çăланăç“ шыракан Толстойра та палăрнă. Толстойăн историлĕ вăйсăрлăхĕ çакăнта пулнă.

Толстойăн художĕствăлă генийĕ çав тери тарăн та сарлака. Толстой произведенийĕсен тĕлĕнмеле страницисем писател хăй калама шухăшланинчен ытларах каласа панă, халĕ те çаплах вăл; вĕсем писател пĕтĕм пурнăç тăршĕпе тарăхулăн шыранă пысăк чăнлăха палăртса тăраççĕ.

Ленин—Сталин аслă партийĕ йертсе пынипе рабочисен классĕ пирĕн çĕршывра тунă социалисăмла револьуци сарлака массăсене культурăпа искусствăн çÿлĕ хаклăхĕсем патне пĕтĕçме май пачĕ. Çав хаклăхсен шутĕнче Толстой çырса хăварнă произведенисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Лев Толстой вырăс литературин мухтавĕлле чапĕ, вырăс халăхĕн мухтавĕпе чапĕ пулса тăракан аслă художниксен шутне кĕрет.

В. Жданăв.

Испанири фронтсенче

Çентаберĕн 8-мĕшĕнче пăлхавçăсен çуран çарĕ хĕвелтухăç фронтĕнче Гандесă секторĕнче калама çук хайар атакăсем тума пуçланă, вĕсем чылай высотасене тытса илме хăтланаççĕ. Атакăсем тума пуçличчен итальянецсен 30 батарейĕ артиллерирен чылай вăхăт хушши персе тănă. Нумай танксем хÿтлесе пынипе пăлхавçăсен çуран çарĕ малтанах пĕр высотана йышăннă пулнă, анчах, республика çарĕсем контратака туса, вăл высотана каялла çапаçса илнĕ. Пăлхавçăсен ытти атакисем те ăнăçсăр пулнă, вĕсем нимĕнле çитĕвÿсем те тăвайман.

Сиерра де Кабальс районĕнче республика чаçĕсем пăлхавçăсене хирĕç калама çук хытăн тăрса вăрçаççĕ. Республиканецсем пăлхавçăсен хĕссе пынине чарса çеç тăман, вĕсем тата пĕр высотана тытса илнĕ. Пăлхавçăсен пысăк çухатусем пулнă.

Республика авиацийĕ çентаберĕн 7-мĕшĕнче Германин виçĕ самолетне персе антарнă, республикăн пĕр самолет та пĕтмен.

Республиканецсем тыткăна илнисем каласа панă тăрăх, йулашки кунсенче пулса иртнĕ çапăçусенче пăлхавçăсен салтакĕсем пит нумай пĕтнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Германи Чехословаки çине тапăнма хатĕрленет

ПРАГĂ, çентаберĕн 9-мĕш. (ТАСС). „Дейче информационен" йатлă фашистла хиреçле бÿллетен, лайăх пелсе тăракан вырансенчен илнĕ хыпарсем тăрăх Генлейн Гитлерпа йулашки хут тĕл пулса калаçни çинчен çырса пĕлтерет.

Генлейн: Англи представителĕпе лорд Ренсименпа калаçнă хыççăн, Чехословаки çине вăрçăпа тапăнсан Англи ирĕксĕрех Чехословакине хÿтлеме пуçлĕ тесе шухăшларăм епĕ, тесе калана, çакăн хыççăн Гитлĕр хайарланса кайса çапла калана: „Çакă вăл—йалтах ухмахла йапала. Англи тата Франци Версале сыхласа хăварассишĕн вăрçма пуçлассине никам та ĕненес çук" тене. (Кунта Версальре вăрçă хыççăн çирепленĕ договăрсен системине тата союзлă державăсем Германине çентернине шута илсе калана). „Пирĕн тĕп задачă вăл,—тене Гитлер,—вăрçăпа тапанмали никĕсе дипломатла чейелехсемпе, тивеçлĕ пропагандăпа хатĕрлесси пулаť. Ăва тума есĕр пĕр иккĕленмесĕрех мана пама пултараттăр".

Гитлĕр Генлейна Чехословаки правительствипе калаçассине аркатса йама тата хĕспăшаллă выступлени хатĕрлеме сĕннĕ. Вăл выступленине „Германи çарĕн мĕн пур вăйĕсем çийĕнчех пулăшĕç"—тене. (Чехословаки чиккисенче Германи çарĕсем пĕр мĕлйун çынна йахăн тăраççĕ).

Америкă пичечĕ Англи политики çинчен мĕн çыраť

Америкă пичечĕ Чехословакири событисене тата Чехословаки правительствипе генлейнавецсем хушшинчи калаçусенче Англи йепле политика тытса пынине тĕплĕн сăнса пыраť.

„Вашингтон стар" хаçат—Англи хĕснипе Чехословаки правительствин генлейнавецсен требованисене йышăнмала пулчĕ,—тесе кăтартса пыраť. „Чехословаки правительствин тарăвлансах пыракан уступкисем тăрăх шутласан,—тесе çыраť хаçат, — Лондăнпа Париж Прагăна сутрĕç тесе каламала". Хаçат çапла астутараť: „Çапла майпа ĕçлесе пынинех Англипе Франци, „мире хÿтлес" шутпа, Абиссинине сутрĕç. Англи правительстви вăрçа сирсе йама кăмал тунине мухтамала, анчах та Чехословаки территорийĕ шучĕпе Гитлĕрпа сделка тунине мухтамали çук. Çакăн пек сделка туса, Англи правительстви Гитлĕр умне: Германа Англине Франция колонисене тытса илме хăвланнине пăрахтăр, тесе услови лартнă пулас. Паллах, кун пек намăссăр сделкăна истори сивлĕ, вăл сделка фашиссене малашне те агрессилĕ ĕçсем тума хавхалантараť кăна".

„Нью-Рипаблик" хаçат çапла çыраť: Англи, вăрçа сирсе йама хăтленнĕ пек пулса, Чехословаки правительствинчен татах уступкăсем пама ыйтаť. Анчах, Гитлĕр ыйтнисем пурнăçа кĕрсен „çитес вăхăтра Йевропа пур государствăсене те хирĕç кĕрешме хатĕр тăракан хальхинчен те пăтсĕртерех, хальхинчен те вăйлăрах Гитлĕрпа тĕл пулĕ".

(ТАСС).

„Çывăх туссем"

Ленинград хулин Дзержински районĕнчи пионергородри Шалойалĕнче, Лужск районĕ, Ленинград облаçĕ.

Секке фото-етÿдĕнчен (Сойузфото).

Горький облаçĕнче виноград тата инжир ÿстерни

Горький облаçĕнчи колхозник-опытниксем Климăв, Йефимăв йулташсем (Воротын р.), РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Барышĕв йулташ, Колокольцĕв йулташ (Починки) тата ыт. тахçантанпах ĕнтĕ хăйсем патĕнче виноград ÿстерсе илес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Халĕ çав опытник-колхозниксен примерĕ тăрăх, винограда облаçри нумай колхозсенче тата сад питомникĕсенче ÿстереççĕ.

Горький хули çумĕнчи совхоз питомникĕ (Шчербинка) 1936 çулта 250 тĕп виноград йăваççи лартнă, кăçалхи çул вăл 100 килограм ытла тĕрлĕрен суртлă виноград çырли пуçтарса илет.

Виноград лартса ÿстернĕ опыт Горький облаçĕнче виноград çеç мар, кăнтăр йенче ÿсекен ытти нумай культурăсене те лартса ÿстерме май пуррине кăтартса панă. Сăмахран, облаçра инжир йатлă культурăна та ÿстерме пулаť.

Шчербинка совхоз питомникĕнче лартнă инжир йăваççисем лайăх ÿсеççĕ, кăçалхи çул вĕсем çырласем те панă ĕнтĕ.

Хула историйĕ çинчен парти пухăвĕнче доклад тунă

СМОЛЕНСК, çентаберĕн 9-мĕш. (ТАСС). Смоленск—пирĕн тăван çĕршыври чи авалхи хуласенчен пĕри, ăна тунăранпа пин çул ытла иртнĕ. Унăн стенисем айĕнче ĕлĕк Польшă тата Литва захватчикĕсемпе, Наполеон çарĕпе çапăçусем пулнă.

ПСК(б) Партин Смоленск хулинчи Сталинск райкомĕ партин районри пухăвне туса иртернĕ. Пухура Смоленск хули историйĕ çинчен пединститут доценчĕ Андрейĕв йулташ доклад туса панă. Пухура 500 çын ытла пулнă.

Хроникă

ССРС тата РСФСР Центросойуз правленийĕ ССРС тата РСФСР Центросойуз Президиумĕн председателне Иван Сергейĕвич Хохлов йулташа суйланă.

(ТАСС).

Ĕçре ÿснĕ работник

ШĂХАСАН. Уйкас Кипек йалповĕ лайăх ĕçлени çинчен пĕтĕм республика пĕлсе тăраť. С. Тихăнăв йулташ 1935 çултанпа пĕр улшăнмасăр йалпо председателĕ пулса ĕçлет.

Халь Тихăнăв йулташа Уйкас Кипек йалпо председателĕнчен хăтарса Шăхасан райпотребсойуз председателне суйларĕç.

Дм. Иванов.

Билетсем улăштарасси çителĕксĕр пыраť

ССР Сойузĕнчи Осоавиахим Тĕп Совечĕ йышăннă тăрăх, ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа нойабĕрĕн 1-мĕшне çитиччен пур организацисенче те членсен билетне улăштарасси пыраť.

Членсен билетне улăштарма тытăннăранпа 2 уйăх иртрĕ. Çак хушăра епĕр хăшпĕр Осоавиахим организацисем лайăх ĕçлеме тытăннине куратпăр. Осоавиахим ĕçĕнче тăшмансем тунă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн тимлĕн ĕçлени сисĕнет.

Осоавиахим Куславкка райсовечĕ (председателĕ Сидоркин) членсен билечĕсене улăштарма малтанах тĕплĕн хатĕрленчĕ. Ку райсовечĕ улăштармали 2648 билетрен çентаберĕн 1-мĕшне 1711 билет улăштарнă. Райсовет руководителĕсем билетсем улăштарнă вăхăтра пуçламĕш организацисенче çар ĕçне вĕренессине лайăхлатрĕç. Районра икĕ хутчен тактикăлă вĕренÿ туса иртернĕ. Тĕрлемесрипе (председателĕ Гераçимăв) Аманикри пуçламĕш организацисенче çар техникине вĕренес ĕçе пур колхозниксене те хутшăнтарнă.

Билетсем улăштарнă вăхăтра Куславкка районĕнче 200 çын Осоавиахим членне кĕнĕ.

Йелчĕк районĕнче те Осоавихим членĕсен билетне улăштарасси лайăх пыраť. Билетсене улăштарма тытăннăранпа çĕнĕрен 170 член илнĕ. Осоавиахим райсовечĕ комсомол организацийĕпе пĕрле Йелчĕк районĕн чикки тăрăх велочупу туса ирттерчĕ. Халĕ противогазпа похода тухма хатĕрленеççĕ. Патрекелти „Осоавиахим" колхоз çумĕнчи Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ химилĕ заняти иртернĕ.

Çавах та, республикĕпе илсен билетсем улăштарасси çителĕклĕ пымаст-ха. Çентаберĕн 1-мĕшне улăштармали пĕтĕм хисепрен 23 процент анчах улăштарнă. Улатăр (председателĕ И. В. Антонăв), Турхан (председателĕ Ф. П. Павлăв), Çĕмĕрле (Акаемăв), Патăрйел (Петров), Хĕрлĕ Чутай (Бельаков) районĕсенчи ОАХ райсовечĕсем çак вăхăта çитсе те билетсене улăштарма пуçăнман. Вĕсем икĕ уйăх кайарах билетсен бланкисемпе учот курточкисене илсе кайнă, халĕ те вĕсемпе усă курман. Осоавиахим Шупашкар хули совечĕ те билетсем улăштарассипе чăтма çук йапăх ĕçлет. Хулари пĕтĕм членсенчен 6 процент çĕнĕ билетсем илнĕ. 113 пуçламĕш организацирен 65 пуçламĕш организацинче билетсем улăштарас ĕçе пуçăнман та.

Хăшпĕр организацисенче ССРС Осоавиахим Тĕп Совечĕ билетсем улăштарасси çинчен панă инструкцине пăсса ĕçлеççĕ. Канаш хули совечĕ çумĕнчи пуçламĕш организацире билетсем улăштарассине нимĕн хатĕрленмесĕрех, инструкцине пăсса иртерне.

Билетсем улăштарас ĕçе тивĕçлипе иртерни кирлĕ. Осоавиахим работникĕсен оборонăлă-массăлă ĕçе вăйлатассишĕн, ĕççыннисене Осоавиахим ĕçне ытларах хутшăнтарассишĕн тăрăшмала.

Комсомол Чăваш Обкомĕ пур райком секретарĕсемпе пур комсоргсене те Осоавиахим билечĕсене улăштарас ĕçе хастарлăн хутшăнма хушрĕ.

Ст. Федотăв.

ЧАССР ОАХ Тĕп Совечĕн оргпай начальникĕ.

Районри хаçатсем тăрăх

● Революциччен Вăрнар районĕнчи Хирпуç йалĕнче çырăва пĕлекен çын та пулман. Халĕ çырăва пĕлмен çын çукпа пĕрех. 13 çула çитнĕ ачасенчен пурте пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă, 16 çула çитнисенчен пурте туллимар вăтам шкул пĕтерне. Кунсăр пуçне, техникумсенче 5 çын, летчиксен шкулĕнче 1 çын вĕренеççĕ. Чукунçул çинче тĕрлĕ специальноçпа ĕçлекенсем 7 çын, тракторисем 7 çын, шоферта виçĕ çын ĕçлеççĕ.

(„Социалисăм çулĕпе").

● Çичпÿртри (Сĕнтĕрвăрри районĕ) Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз пĕлтĕр 18 лаша вăйлĕ двигатĕл илнĕ. Ку двигатĕлпе халь колхоз аван çапаť тата арман авăртаť. Октабĕр революцийĕ 21 çул тултарнă тĕле кашни колхозник килнех електричĕствă çути кĕртме хатĕрленеççĕ.

(„Ударник").

● Тутаркас районĕнче колхоза кĕрекенсен шучĕ ÿссех пыраť. Пушкăрт йалсоветĕнче виçĕ кун хушшинче 26 хуçалăх, Йакаткасси йалсоветĕнче 9 хуçалăх, Шашкар йалсоветĕнче 6 хуçалăх колхоза кĕчĕç. Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ М. С. Князĕв йулташ Пушкăрт йалсоветĕнче большевикла агитаци ĕçне пĕтĕм актива йавăçтарнă, ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса парас ĕçе анлăн сарса йанă.

(„Ĕç йалавĕ").

● „Липăвкă" колхозра (Турхан р.) кăçал колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне икшер тенкĕн укçан тата виçшер килограм тĕштырă параççĕ. Гурий Иванов колхозник çемйи 1000 ĕçкунĕ ытла тунă. Уншăн вăл кăçал 2.000 тенкĕ укçа тата 3 тоннă тĕштырă илет.

(„Коммунар").

Призыв пунктĕнче

Шупашкар хулинчи призыв комиççийĕ строителсен клубĕнче вырнаçнă. Икĕ хутлă илемлĕ çурт. Тул йенчен хĕрлĕ хăмачсемпе илемлетсе пĕтернĕ. Шала кĕретĕн. Алăкран кĕрсенех тĕрлĕ ыйтусем тăрăх справкă илме пулаť, кунтах дежурнăй лараť.

Çуртăн иккĕмĕш хучĕ ытларах илĕртет. Коридор икĕ айăккипе хăмач çине çырнă лозунгсене çакса тухнă. Çулпуççен портречĕсем, бÿстсем. Çурт ытла та илемлĕ, праçник чухнехи пек. Кашни пÿлĕмех призывниксем йышăнса илнĕ. Хĕрлĕ кĕтес, биллиарднăй, читальнă. Кунта призыв комиççийĕ вырнаçнă.

Вăхăт кичем иртмест. Массăлă ăнлантарулă ĕçе лайăх организацилене. Запасра тăракан командирсем—граждăн вăрçи участникĕсем çар служби çинчен калаçусем иртереççĕ. Çентаберĕн 10-мĕшĕнче кун пек калаçăва запасра тăракан командир Запольский йулташ иртерчĕ. Призыв пунктинче политикăлă воспитани ĕçне лайăх организациленĕ. Августăн 9-мĕшĕнче Шупашкарти ача-пăча театрĕнчи артистсем призыв пунктине пырса „Ружье Кима" йатлă пиесса лартса панă. Çентаберĕн 10-мĕшĕнче „На Дальнем Востоке" кино пулчĕ.

Çамрăксем Хĕрлĕ Çар ретне хавасланса кайаççĕ. Призыв комиççи председателĕ Йандарайĕв йулташ каланă тăрăх, нумай призывниксем хăйсене саккун тăрăх тивекен льготăсемпе усă курмаççĕ. Данилăв шоферĕ льготă панă. Вăл кунпа килĕшмесĕр хăйне мотомех чаçне йама ыйтса зайавлени пачĕ.

* * *

10 минут хушши каннă хыççăн комиççи ĕçе тытăнчĕ. Çамрăксем пĕрерĕн пĕрерĕн призыв комиççийĕ ларакан пÿлĕме кĕреççĕ. Почтăра аслă кассир пулса ĕçлекен И. Димитрийĕв врачсем патне пычĕ. Ăна врачсем тĕплĕн пăхма тытăнчĕç.

Пысăкăх мар патмар ача. Комиççи председателĕ льготăпа усă курма шутламастăр-и?,—тесе ыйтаť. Димитрийĕв льготă илме килĕшмест. Комиççи ăна çыхăну чаçĕн полковой шкулне илме йышăнчĕ.

Сывлăшпа тинĕс флотне тата мотомех чаçа кайасшăннисем нумайийи кураť. Призывник Бабышĕв шыв çинче ĕçлесе пурăнаť. Çавăнпа та комиççирен хăйне тинĕс флотне илме ыйтрĕ.

Комиççине кĕрекен çамрăксем çар ĕçне вĕренсе пынă. А. В. Васильйĕв производствăра ĕçлессинчен уйăрăлмасăр пилота вĕренсе тухнă. Самолетпа хăйне тĕлĕн 175 хут вĕçнĕ. Ăна сывлăш флотне йышăнчĕç.

Шупашкарта виçĕ кун хушши призыв пыраť. Телейлĕ те хавасла çамрăксем Хĕрлĕ Çарпа флот ретне тăма призыва кĕреççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕн таксантанпа кĕтнĕ ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрет.

Т. Майорăв.

Çĕнĕ магазин

ЙЕЛЧĔК. Çак кунсенче Йелчĕкри йалпо çумĕнче район центрĕнче çĕнĕрен пысăк магазин уçнă. Магазин илемлĕ те культурăлă.

Çĕнĕ магазинра малтанхи кунах пин тенке йахăн тавар сутнă. Колхозниксене куллен кирлĕ таварсем нумай.

Гер. Иванов.

Çĕнĕ фильм

„Ухатник Федăр йапонецсене мĕнле хăваласа йани"

„Союзмультфильм" студийĕ „Ухатник Федăр йапонецсене мĕнле хăваласа йани" йатлă мультипликацилĕ фильм ÿкерсе пĕтерне. Çак фильмăн сценарине вырăс халăхĕн чаплă халапĕ тăрăх тунă. Вăл халапа иртнĕ çулта Бурйат-Монгол республикĕнчи Тункинск районĕнчи Ближний Хобок йалĕнче Г. Н. Сороковикăвран çырса илнĕ, ăна „Творчество народов СССР" йатлă сборникре пичетленĕ.

Халăх пултарулăхĕнчи çак питĕ те чаплă произведени совет патриотисăмĕпе тулнă. Ухатник Федăр тата унăн икĕ пиччĕшĕ совет чикки урлă каçнă йапонецсен хĕçпăшаллă отрйачĕпе йепле паттăрăн çапăçнине вăл лайăх кăтартса параť. Халăх халлапĕ çак кĕрешĕве çутçанталăка та кĕртнĕ. Тискеркайăксем, вĕçен-кайăксем, вăрман тата çилтăвăл—пурте вĕсем тăван çĕршыва ирсĕр тăшманран хÿтлекен совет çыннисене пулăшаççĕ.

(ТАСС).

Филармони концерчĕ

Çентаберĕн 7-мĕшĕнче Чăваш государствă филармони артисĕсем Шупашкарти тырă йышăнакан пунктра колхозниксене концерт лартса пачĕç.

Чи малтанах артис Христофорăв трапе çинче гимнастика туса кăтартрĕ. Артист Зверĕв совет поечĕсен сăввисемпе декламаци турĕ. Артисткă Каминскайа „Комсомольская", „Над полями", „Урожайная" т. ыт. йурăсене йурларĕ. Йулашкинчен Лебедĕвпа Зверĕв артиссем дресировкă тунă упа илсе тухрĕç.

Т. Мирский.

Пысăк тухăçлă ĕç маçтăрĕсем

Шупашкарти строительствăра пысăк тухăçлă ĕç маçтăрĕсен йышĕ кунсеренех ÿссе пыраť. Çамрăк рабочисем стахановецсен ретне тăраççĕ. Çамрăксем производствăра ĕçленĕ хушăрах техника курсĕнче вĕренеççĕ.

Скворцов й. бригади ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаť, вăл август уйăхĕнчи плана 180 проц. тултарнă. Бригадă членĕсем кунсерен 17 тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Скворцов й. бригади Йакăвлĕв й. бригадипе ăмăртаť. Стахановла йухăм 3 çул тултарнă кун администраци Скворцов й. бригадине премй пачĕ.

Вас. Дмитрийĕв.

Республикăри сьота кайма тивĕçлĕ пулассишĕн

ШĂХАСАН. Çентаберĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта суту-илÿ ĕçĕнчи отличниксен, стахановецсен республикăри сьочĕ пулса иртмеле. Вăл сьота кайма Шăхасан райпотребсойузĕнчен 13 çын палăртнă. Сьота кайма палăртнă продавецсем республикăри сьота пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Продавецсем хăйсем çине III-кварталти таварçаврăнăш планне срукчен ытлашшипех тултарма, культурăлă суту-илÿ ĕçне лайăхлатма обйазательствăсем илнĕ. Уйкас Кипек йалпори продавецсем — Романăв, Иванов йулташсам, Матшури И. Çергейĕв продавец, Чулкăмака йалповĕн продавецĕ В. Дмитрийĕв суту-илÿ ĕçĕнче социалисăмлă ăмăртăва вăйлăн сарса йанă. Вĕсем кашнийех пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Дм. Иванов.

Совет работникĕсен курсĕ

Чăваш АССР 12 çул тултарнă йатпа хисепленсе тăракан канмалли çуртра—Кувшинкăра—совет работникĕсен 6 уйăхлăх курсĕ уçăлчĕ. Курсра пурĕ 44 çын—райĕçтăвком председателĕсем, заместителĕсем, секретарĕсем, пĕтĕмĕшлĕ пайсен заведуйушчисем тата кадрсен пайĕн заведуйушчисем вĕренеççĕ.

Курсантсем хушшинче — ССРС Верховнăй Совет депутачĕ О. Т. Харитонăвă йулташ (Патăрйел райĕçтăвком председателĕ), Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсем 5 çын.

П. Петров.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Економсовечĕ кăçалхи çентаберĕн 1-мĕшĕнче йышăннă ĕç 211—11 номерлĕ решени тăрăх, денатуратăн вакăн сутмалли хакĕ пĕр декалитршăн 60 тенкĕ пулаť.

Шупашкарти ерех савăчĕ.

2—1

Шатралă тиф чирĕнчен сыхланасси

Шатралă (сыпной) тиф чирĕ пĕр çынтан тепĕр çынна хăвăрт йерекен чир. Вăл етеме питĕ йăвăрăн чирлетерекен хăрушă чирсенчен пĕри пулса тăраť.

Ĕлĕкхи саманара халăх выçăллă-тутăллă, йăвăр пурнăçпа, тĕрлĕрен асап та мăшкăл курса пурăннă вăхăтра, шатралă тиф чирĕпе халăх шутсăр нумай вилсе пĕтнĕ, чирпе суранланса, чăлахланса йулакансем нумай пулнă.

Патша вăрçи тата граждăн вăрçи вăхăтĕнче, Атăл тăрăх пулнă выçлăх çулсенче, шатралă тифпа мĕн пурĕ 7 мĕлйун çын ытла чирленĕ. Кунта пурне те шута илмен. Ун чух тухтăрсем пульницăсем сахал пулнипе шута илме те пултарайман.

Вăрçă вăхăтĕнче тĕрлĕрен тиф чирĕсемпе халăх мĕн чухлĕ вилнине вăрçăра пулнă çынсем лайăх астăваççĕ. Мĕншĕн капла пулнă-ха? Вăрçă вăхăтĕнче халăх тĕрлĕрен нуша курнă. Выçăлă-тутăлă, кĕпе-тумтир улăштармасăр çăмăр йе пыльчăк айĕнче уйăхĕ-уйăхĕпех вăрçăра пулса, пыйтланса кайнă.

Тиф чирĕ чирлĕ çынтан сывă çынна пыйтă урлă çеç йерет. Пыйтă чирлĕ çын йунне ĕçнĕ хыççăнах тепĕр сывă çын çумне çыпăçса вараласа хăвараť. Вăл пыйта ăшĕнче чирлĕ çын йунĕнчи токсин пур, вара çав токсин сывă çынна лексен, çын 7 йе 12 талăкран чирлесе выртаť.

Чир йерсен малтанхи кунах ÿт-пĕве йăвăрлантараť. Каштах пуç ыратма пуçлаť, майĕпен ытларах та ытларах ыратма пуçласа, йулашкинчен çурăлса тухас пекех ыратма тытăнаť. Шăнтаť, вĕрилентерет, вăхăтлă 36,6 градус вырăнне вĕри 39—40 градуса çитет. Тутаçăвар куштăркаса типсе кайаť, апат аними пулаť, каштах ÿслĕк те пулма пултараť. 2-мĕш йе 3-мĕш талăкра вырăн çинчен те тăрас килмест. Пуç тата хытăрах ыраťаť. Вар хырăмсем те ыратнă пек туйăнаççĕ. 3-мĕш 4-мĕш талăкра вĕтĕ вĕтĕ шатра персе тухаť, тата ытларах йăвăрлантараť. 8 мĕш 9-мĕш талăкра шатрасем тĕссĕрленсе сÿнеççĕ, вара ÿт вĕттĕн (лĕкĕ пек) сĕвеленсе тăкăнаť. Ку вăхăтра çын тăнран тухма та пултараť, аташма пуçлаť.

10 мĕшпе 17-мĕш талăк хушшинче иккĕлĕ пулма пултараť: майĕпе çын çăмăланнă пек туйаť, йе чĕре начар пулсан, вилме те пултараť. Шатралă тиф ÿпке-пĕвер, çуллă пÿре, пуç мими чирĕсемпе те хутшăнма пултараť. Вара вăл ун пек чух пушех те хăрушă. Йăлан ерех ĕçсе пурăннă çынсем чăтаймаççĕ, чылайĕшĕ вилеççĕ.

Шатралă тифран сыхланас тесен пыйтă-шăркасене тĕл тăвас пулаť. Ку ĕç йăвăр мар, тăрăшни çеç пултĕр. Кашни ернере мунча кĕрсе, кĕпе-йĕме улăштармала, ытти тумтирсене мунчара йе камăрăсенче вĕри сывлăшпа хĕртентермеле, улăштарнă çипуççене кĕл шывĕпе лайăх вĕретсе супăньпе çăвас пулаť. Кайран уÿкпа татах хĕртĕнтерсен аван пулаť, уÿкласан çĕвĕ тавраşĕнчи шăркасем те вĕçех пĕтеççĕ.

Шкул ачисен çÿçе кĕске усрамала, вăхăтра кастармала. Хĕрачасен кашни канмали кунах пуçа пĕрер çумала, — шăркасем татах пĕтмесен, çÿçе краçинпа сĕрсе, каçхине тутăр çыхса выртмала. Ирхине вара вĕри шывпа çуса тăкмала.

Шкула çÿрекен ачасене ашшĕ-амăшĕсен тасалăх йенчен йăланах асăрхаса тăмала. Шкулта йĕр ача пыйтăлă пулсан, вăл вара ытти ачасене те йертме пултараť. Учителсен ачасем çÿçе кĕске тытнине, ÿт-пĕве, пите-куçа, алăсене, кĕпе-тумтирсене таса тытнисене сăнаса пырса, паллă тусах тăмала. Çынсем пуçтарăнакан вырăнсене—клубсемпе вулав çурчĕсене, общежитисене тата ыттисене те таса тытмала. Ăçта пыльчăк, тусан, ерешмен карти нумай—унта пыйтă-шăрка, пăрçа, хăнкăла, таракан тата ытти те. Вĕсем пур те тĕрлĕрен чирсем сараççĕ.

Килйышсен пÿртсене таса тытма тăрăшмала. Саксене, урайсене часчасах вĕри шывпа çумала. Тăхăнмали тумтир, выртса тăмали тумтир тÿшек-минтер тавраşсене кашни мунча хутмассерен вĕри сывлăшпа хĕртĕнтерес пулаť. Киль-йышра кашни çыннăн çывăрмалли вырăн уйрăм пулмала, ытлашши тумтирсене пÿртре усрама йурамасť. Пÿлĕмре нихăçан та 17—18 градусран ытла ăшă пулмала мар. Çывăрнă чух ытлашши хулăм витĕнсе выртма йурамасť. Тухса çÿренĕ чух нихăçан та икĕ хутран ытла кепе тăхăнма йурамасť. Шкулсенче ачасене тумтирпе лартмала мар. Çăмăл çипуç тăхăнса çÿресен етем ÿт-пĕвĕ сывă та чăтăмлă пулаť.

Йалсенчи сывлăх çекцисен, санитарсен, трахработниксен, фельдшерсен çаксене асăрхаса тăрсан аван пулĕччĕ. Кил-йышсен тасалăхне уйăхра пĕрер икшер пăхса тухмала тăвас пулаť.

Йалта чирлĕ çын пулсан, ун çинчен хăвăртрах çывăхри пульнипăна пĕлтермеле. Чирлĕ çынна пульницăна ăсатмала. Шатралă тифпа чирленĕ çынна нихçан та килте усрама йурамасť. Чир йăвăр пулнă пирки етем вилсе кайма пултараť. Ку чирпе чирленĕ çынна килте усранине пĕлсен кил хуçине штрафлама йе сут умне тăратма та саккун пур. Чирлĕ çынна пульницăна леçсенех çемйери ытти çынсене кашни 5 талăкра виç-тăватă тапхăр мунча кĕртес пулаť. Çи-пуçсене, пÿрт-çурта дезинфекци тумала.

Халăх хушшинчи тасалăха upрасси тата шатралă тифпа кĕрешесси кирлĕрен те кирлĕ ĕç пулса тăраť. Ку чирпе кĕрешес ĕçе пĕтĕм массăна явăçтармала.

Врач Стольаров.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илме хакĕсем:пĕр уйăха 2 т. 50 пус. 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т. сутăлăна 30 тенкĕ. Подписăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 478

Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 711, ф. б. 58Х84 п. л.